ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЧĂВАШ ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

169 (9848) № | 1956 çулхи августăн 19-мĕшĕ, вырсарникун | Хакĕ 20 пус. 39-мĕш çул тухать.

Апат-çимĕç промышленноçне хăвăртрах аталантарса пырар

Пирĕн республикăра, пĕтĕм çĕршыври пекех, апат-çимĕç промышленноçĕ çултан-çул аталанать. Совет влаçĕ çулĕсенче вуншар предприяти çĕнĕрен туса лартнă, киввисене урăхлатса çĕнетнĕ, вĕсене техникăпа пуянлатнă. 1955 çулта СССР, РСФСР тата Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствисене пăхăнса тăракан пирĕн республикăри предприятисем 238 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Унсăр пуçне аш-какай тресчĕ, сĕт-çу тресчĕ, промысла кооперацийĕ, потребительсен кооперацийĕ тата ытти суту-илӳ организацийĕсем çулсерен вуншар миллион тенкĕлĕх апат-çимĕç хатĕрлеççĕ.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхра республикăра механизациленĕ аш-какай комбиначĕсем, çу тата сыр заводĕсем, çăкăр, сăра, консерв заводĕсем, шурă çăнăх авăртакан армансем чылай лартма, халĕ ĕçлекен предприятисене пысăклатма, йывăр ĕçсене механизацилеме палăртнă. Малашне пирĕн сахăр заводĕсем те пулĕç. РСФСР Министрĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, 1960 çулта республикăра 25 пин тонна сахăр туса кăлармалла. Çавна май çитес çулсенче сахăр заводĕ лартмалла, колхозсенче сахăр кăшманĕ акса ӳстерме тытăнмалла.

Çитĕнӳсем пур пулин те республикăри апат-çимĕç промышленноçĕ ĕççыннисен куллĕнхи ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтересе пыраймасть-ха. Уйрăм предприятисем паха мар продукци туса кăлараççĕ, теприсем—апат-çимĕç ассортиментне нумайлатмаççĕ е халăха хăш вăхăтра мĕнле çимĕçсем кирлине шута илмеççĕ. Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерстви кăçалхи çур çулхи плана тултараймарĕ, пĕлтĕрхи çур çулхинчен те сахалрах продукци туса кăларчĕ. Ăна пăхăнса тăракан промышленность ĕççыннисене çăкăрпа булка, пулă, сăра тата ытти хăшпĕр япаласем чылай парса çитереймен.

КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ столицăри строительсен пухăвĕнче совет халăхне ырă хыпар пĕлтерчĕ: «Апат-çимĕç ресурсĕсем тĕлĕшпе пирĕн малашлăхсем мĕнлине илсе пăхсан, пĕр сăмахпа çапла калама пулать: çак çул уйрăмах питĕ паллă çулталăк пулса тăрать, вăл пирĕн çĕршыври халăхсене савăнтарĕ»,—терĕ. Пĕтĕм çĕршыври пекех, пирĕн республикăра та апат-çимĕç туса кăларассине ӳстермелли пысăк резервсем пур. Колхозсен уй-хирĕсенче тухăçлă çĕрулми, купăста тата ытти хăшпĕр пахча çимĕç ӳсе çитĕнет. Сĕт суса илесси, выльăх самăртасси вăйланса пырать.

Нумаях пулмасть КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ «Улма-çырла тата виноград туса илессине хатĕрлессине ӳстерессн çинчен» йышăннă постановленире улма-çырла нумайрах туса илсе государствăна сутма колхозсемпе колхозниксене пурлăх енчен ытларах интереслентерес тата çак продуктсене халăха сутас ĕçе вăйлатас тесе улма-çырлана тата кăмпана вырăнти колхоз пасарĕнче пулакан хаксем тăрăх хатĕрлеме ирĕк пачĕç. Çак постановлени апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсен пуçарулăхне ӳстерме пулăшрĕ.

Шупашкар хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ плана уйăхран уйăха ирттересе тултарать, продукци ассортиментне нумайлатать, çĕнĕ цехсем уçать. Çакă вăл унăн руководителĕсем (директорĕ Ефремов юлташ) пуçарулă пулнипе, вырăнти ресурссемпе усă курма тăрăшнипе килет. Комбинат çырла тата кăмпа хатĕрлеме йăлăмри вăрманта пунктсем уçнă. Кĕске вăхăт хушшинче 16 тонна ытла çырла тата кăмпа чылай хатĕрленĕ. Етĕрнери, Çĕрпӳри, Элĕкри, Сĕнтĕрвăррипчи тата Хĕрлĕ Чутайри апат-çимĕç комбиначĕсем те паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Йĕпреç, Çĕмĕрле, Пăрачкав тата Улатăр районĕсенчи вăрманта та çырла сахал мар пулнă, анчах унти апат-çимĕç комбиначĕсен руководителĕсем çавăн пек паха майсемпе усă курма тăрăшмаççĕ. Тĕслĕхрен, Пăрачкаври апат-çимĕç комбиначĕ пурĕ те 82 килограмм çырла хатĕрленĕ. Çав вăхăтрах Етĕрнери апат-çимĕç комбиначĕ 17 тонна çырла туянма ĕлкĕрнĕ.

Кăçалхи пек кăмпа нумай пулнине ваттисем те астумаççĕ. Апла пулин те кăмпа хатĕрлес ĕç чăтма çук япăх пырать. Августăн 10-мĕшĕ тĕлне Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисем çак паха апат-çимĕçе пурĕ те 3 тонна çеç хатĕрленĕ. Пахча çимĕç хатĕрлес тата сутăн илес ĕç те вăраххăн сарăлса пырать.

Аш-какай тата сĕт-çу промышленноçĕнче те çитменлĕхсем сахал мар. Шупашкарти аш-какай комбиначĕ чылайранпа юлса пырать. Кăçалхи пĕррремĕш çур çулта вăл ĕççыннисене 25 тонна колбаса, 6 тонна пельмен, 40 пин кукăль парса çитереймен. Хăшпĕр предприятисенче аш-какайпа сĕт-çу продукчĕсене типтерлĕ тыткалаймаççĕ, саратнă е тĕрĕс мар сутнă тĕслĕхсем те пулаççĕ.

Апат-çимĕç промышленность предприятийĕсем туса лартма республикăна çулсеренех укçа-тенкĕ нумай уйăрса параççĕ. Анчах государствăн çав пысăк пулăшăвĕпе кирлĕ пек усă курмастпăр. Çакă вăл пуринчен ытларах «Росмясомолстрой» тресчĕн республикăри строительствăпа монтаж управленийĕ (управляющийĕ Линев юлташ) япăх ĕçленинчен килет. Вăл пĕр предприятие те палăртнă срокра туса пĕтермен. Шупашкарти сĕт-çу заводне тата аш-какай комбинатне темиçе çултанпа ĕнтĕ тăваççĕ, апла пулин те вĕçĕ курăнмасть.

Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерстви, аш-какай тресчĕпе сĕт-çу тресчĕ хăйсене пăхăнса тăракан предприятисене ертсе пырассине вăйлатма, юлса пыраканнисене тивĕçлĕ пулăшу пама, новаторсен, малта пыракан коллективсен опытне анлă сарма тивĕçлĕ. Апат-çимĕç промышленноçĕ ăнăçлă ĕçлесси пуринчен ытларах кĕркунне чĕртавар вăхăтра хатĕрлесе хунинчен, ăна лайăх пăхса усранинчен, перекетлĕ расходланинчен килет. 1956 çулхи плана тултарма кашни предприятин мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Вĕсемпе пĕлсе тата тĕрĕс усă курни, хуçалăх, парти тата профсоюз организацийĕсен руководителĕсем пуçарулă пулни, государство çирĕплетсе паракан плансемпе заданисене вăхăтра пурнăçлассишĕн ответлăха туйни çеç кирлĕ.

Апат-çимĕç промышленноçĕн работникĕсене Тăван çĕршыв хисеплĕ те ответлă ĕç шанса панă. Вĕсем совет çыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăлараççĕ. Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса, вĕсем хăйсем умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пырĕç, çапла вара пирĕн халăхăн пурнăçне малалла лайăхлатма пулăшĕç.

Пĕтĕм Союзри промышленность выставкине 3 миллион çын пырса курнă

Пĕтĕм Союзри промышленность выставкине халĕ те Мускав çыннисем тата столицăна килекен хăнасем нумайăшĕ пырса кураççĕ. Выставка павильонĕсенче кашни кунах темиçе пин экскурсант пулать. Вĕсем валли кашни кунах техника прогресĕ ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем ирттереççĕ, производство новаторĕсем малта пыракан опыт çинчен каласа параççĕ.

Пĕтĕм Союзри промышленность выставки уçăлнă кунранпа унта виçĕ миллион çын ытла пулнă. Унта çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенчи рабочисем, инженерсем, ялхуçалăх механизаторĕсем, колхозниксем тата совхозсен рабочийĕсем пырса курнă.

Выставкăна çĕнĕ экспонатсем илсе пыраççĕ. «Машиностроени» павильонне çĕнĕрен 250 лаша вăйлă, дизеллĕ, электричество энергийĕпе ĕçлекен трактор илсе пырса лартнă. Ăна Челябинскри трактор заводĕнче тунă.

Выставкăри çĕнĕ экспонатсен шутĕнче—хула тулашĕнчи вырăнсенче çӳремелли автобусăн сăнаса пăхма тунă образецĕ. Çак автобус сехетре 70—80 километр кайма пултарать. Ку машинăна Львоври автобус заводĕнче туса кăларнă.

Хими промышленноçĕн çитĕнĕвĕсене кăтартакан павильонра азотлă удобренисен заводĕн макетне кăтартаççĕ, вăл çутçанталăкăн йӳне ларакан газĕпе ĕçлет.

Выставка курма пыракансем «Çăмăл промышленность» павильонĕнче те çĕнĕ экспонатсене кураççĕ. Кунта искусственнăй сӳссене кăтартнă çĕрте вискоза пурçăнĕ туса кăларакан комбайна вырнаçтарса лартнă, çав пурçăнран автопокрышкăсен айне хумалли пир (корд) хатĕрлеççĕ. Машина пур ĕçсене те тăвать. Çак павильонрах сӳсрен пĕр вăхăтрах çип арласа пĕтĕрекен машина вырнаçтарса лартнă. ((ТАСС).

Тырă вырса пĕтерчĕç

СОВЕТСКИ. Киров ячĕпе тăракан колхоз ĕçченĕсем кăçал вăйлă тырпул çитĕнтерчĕç. Ырашпа кашни гектартан 15 центнер тухать. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш уй-хир бригадисенче тырпул тухăçлăхĕ тата пысăкрах. Кунтă мĕнпур лаптăк çинчен кашни гектар пуçне 16—18 центнер ыраш, 19 центнер тулă пухса кĕртнĕ.

Колхоз государствăна тырă памалли плана иртнĕ çулхинчен вунă кун маларах тултарчĕ. Хатĕрлев пунктне тырă леçес ĕçре Михаил Водников шофер хастарлă ĕçлерĕ.

Украинăри çĕр кăмрăк промышленность работникĕсен канашлăвĕ

СТАЛИНО, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Донбасс—пирĕн çĕршывра топливăн пысăк бази. Вăл халĕ Совет Союзĕнче кăларакан мĕнпур çĕр кăмрăкĕн виççĕмĕш пайне яхăн парса тăрать.

Паян Сталино хулинче уçăлнă канашлура Совет Союзĕн Европăри пайĕнчи халăх хуçалăхĕ топливо ытларах та ытларах ыйтнине тивĕçтермелли хальхи шахтăсенче кăмрăк кăларассине мĕнле ӳстересси, производствăн çĕнĕ хăвачĕсене мĕнле майпа хăвăртрах ĕçе кĕртесси çинчен сӳтсе явнă. Украина республикинчи çĕр кăмрăк промышленноçĕ работникĕсен канашлăвне Украинăри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Украина ССР Министрĕсен Совечĕ пухнă.

Канашлу ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташпа Украинăри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. И. Кириченко юлташ хутшăннă. Канашлура тата СССР Çĕр кăмрăк промышленность министрĕ А. Н. Задемидко юлташ, СССР Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительстви министрĕ Л. Г. Мельников юлташ, партин Сталино обкомĕн секретарĕ И. П. Казанец, Ворошиловград обкомĕн секретарĕ В. К. Клименко, Львов обкомĕн секретарĕ М. К. Лазуренко, Волынь обкомĕн секретарĕ И. С. Климаш, Кировоград обкомĕн секретарĕ Ф. И. Мартынов юлташсем пулнă.

Канашлăва Украинăри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. И. Кириченко юлташ уçнă.

Çĕр кăмрăк кăлармалли плана тата çĕр кăмрăк промышленноçĕн предприятийĕсене тумалли плана пурнăçлас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен Украина ССР Çĕр кăмрăк промышленность министрĕн заместителĕ М. Н. Нырцев юлташ тата УССР Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительстви министрĕ Г. В. Красниковский юлташ докладсем туса панă.

Совет Украинăри çĕр кăмрăкĕ кăлараканĕсем КПСС XX съезчĕ лартнă пысăк задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра республикăра çĕр кăмрăкĕ кăларасси 62 процент ӳсмелле. 132 çĕнĕ пысăк шахта, пилĕкмĕш пилĕкçуллăхринчен 2,8 хут нумайрах тума палăртаççĕ. Шахтăсенчи тата çĕнĕ стройкăсенчи йывăр тата вăй нумай хумалли ĕçсене механизацилес енĕпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Халех ĕнтĕ çĕр кăмрăкĕн 45 процентне комбайнсемпе кăлараççĕ. Çĕр кăмрăкĕ кăларнă чухне тухакан тăпран виçĕ пайĕнчен икĕ пайне машинăсемпе тиесе турттараççĕ.

Халĕ Донбасри шахтерсене хăйсем топливо çителĕксĕр парса тăни, бассейн нумай вăхăт хушши çĕр кăмрăкĕ кăлармалли плана тултарса пыраймани, çавăн пекех ĕç тухăçлăхне ӳстерес тата çĕр кăмрăкĕн хăйне ларакан хакне йӳнетес тĕлĕшпе заданисене пурнăçлайманни хумхантарать.

Шахтерсемпе трестсем начар ĕçленин сăлтавĕ çакăн пек: хальхи предприятисенчи забойсен линийĕсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ, организаторла ĕçпе техникăлла руководство шайĕ кирлĕ вырăнта тăмасть.

Ĕç нормисене тăвассинче те, ĕçлевне ĕç укçине йĕркелессинче те пысăк çитменлĕхсем пур, çакă вара час-часах уравниловка патне илсе пырать, чи кирлĕ професисене ĕçлекен рабочисен материальнăй интересне ӳстермест.

Докладсем тăрăх прениссенче нумайăшĕ тухса каланă. «Куйбышевуголь» трест управляющийĕ Ф. Т. Гапоненко çакăн çинчен пĕлтерчĕ: трест, шахтерĕсем государство планне ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа çĕр кăмрăкĕ талăкра 15 процент ытларах кăларма пуçланă.

Анчах çак малта пыракан трестра та заданисене пурнăçлайман шахтăсемпе участоксем пур. Гапоненко юлташ шахтостроительсен çĕр кăмрăкĕ кăлармалли çĕнĕ предприятисене туса пĕтермесĕрех эксплуатацилеме пание палăртать. Çакă вара шахтăсен проектра палăртнă хăвачĕпе усă курма тытăнас ĕçре чăрмав кӳрет. Оратор вырăнти организацисен руководителĕсене пурăнмалли суртсене çав предприятипе сыхăнман çынсене вырнаçтарнăшăн критиклет. Сăмахран, «Ветка—Глубокая» ятлă çĕнĕ шахта тăваççĕ, çав шахтăри рабочисен поселокĕнчи нумай хваттерсене ку предприятире ĕçлемен çынсем йышăннă. Çав вăхăтрах шахтăра ĕçлекенсем валли пурăнмалли суртсем нумай çитмеççĕ.

Трибуна çинче — «Краснолучуголь» трестăн «Боково-Платовская» шахтин 2-мĕш участокĕн начальникĕ П. П. Бодня юлташ. Вăл çакна палăртать: ĕç укçи ыйтăвĕсене кашни шахтăра хăйсем мĕнле шутланă пек татса параççĕ, çав вăхăтрах Украина ССР Çĕр кăмрăк промышленность министерстви çав йĕркесене тĕпчесе вĕренмест, предприятисенче тухса тăракан çĕнĕ майсене пĕтĕçтерме тăрăшмасть.

Донбасс ĕçре кая юлнăшăн хăйне хытă хумхантарни çинчен «Красногвардейскуголь» тресчĕн 1—1-бис номерлĕ шахтинче ĕçлекен навалоотбойщик В. С. Матерниский каланă.

— Партипе правительствăн ответлă заданийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешекенсем хушшинче комсомол малти ретре пырать,—тенĕ Украинăри ленинла комсомолăн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ В. И. Дрозденко юлташ. Çамрăксем парти чĕнсе каланине хапăл туса йышăнчĕç. Иртнĕ çулта бассейнри шахтăсенче ĕçлеме Украинăран 16 пин çамрăк патриот пычĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ халĕ ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартать. Кăçал Донбасри горнякĕсен ретне республикăри комсомолецсен пысăк йышлă çĕнĕ отрячĕ хутшăнать.

«Советскуголь» трестăн 13-бис номерлĕ шахтинчи парторганизаци секретарĕ К. Ф. Цапук юлташ горнякĕсен коллективĕ çав тери тăрăшса ĕçлени, заданисене ăнăçлă тултарса пыни çинчен каланă. Вăл республикăн çĕр кăмрăк промышленность министерствине ĕçри юрăхсăр практикăшăн критиклет. Партин XX съезчĕ хыççăн министерство хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетмен, предприятисене ертсе пырас ĕçе хут çырнипе кăтартусем панипех туса пыма пăхать.

«Шахтерскшахтострой» тресчĕн управляющийĕ Ю. Я. Заблодский юлташ строительствăна монтаж ĕçĕсене планлас тата материалсем тăратас ĕçри юрăхсăр практикăна критикленĕ.

Донбасра та, ытти бассейнсенче те «Кочегарка» шахта коллективĕн пуçарăвĕ çинчен нумайăшĕ пĕлеççĕ. Шахтăри рабочисем, мастерсем, инженерсем, парторганизаци активлă пулăшнипе, ĕçшĕн çĕнĕлле—çĕр кăмрăкĕ мисе тонна кăларнă тăрăх тӳлемелли йĕркене пурнăçа кĕртме, участокĕнче ĕçе комплексла организацилессипе тата хуçалăх расчетне йĕркеленĕ. Çĕнĕлле ĕçлени малтанхи результачĕсем çинчен шахта начальникĕ Л. Д. Слинченко юлташ каласа панă.

Пренире тата партин Сталино обкомĕн секретарĕ И. П. Казанец, «Красноармейскугольшахтострой» тресчĕн 3-мĕш строительство управленийĕн начальникĕ А. В. Храпаль, партин Попаснянск райкомĕн секретарĕ П. В. Бутенко юлташсем тухса каланă.

Канашлура КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ тухса каланă, ăна канашлăва пухăннисем ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

Канашлăва пухăннисем Украинăри çĕр кăмрăк промышленноçĕнчи мĕнпур рабочисене иккĕмĕш çур çулта çĕр кăмрăкĕ кăлармалли плана тата Украинăри çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительство планне срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртассине анлă сарма чĕнсе калани йышăннă.

Сталино хулинчи çĕр пин çынлă митинг

СТАЛИНО, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Шахтер» спорт обществин центральнăй стадионне халăх паянхи пек йышлă пухăнни халиччен нихçан та пулман-ха. Украинăри çĕр кăмрăк промышленность работникĕсен канашлăвĕ вĕçленнĕ ятпа ирттернĕ çак митинга область центрĕнчи предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен рабочисем, инженерсем, служащисем çĕр пин çынна яхăн пухăннă.

Унта Петровкăри, Рудченковăри, Буденновкăри шахтерсем, Сталино хулинчи Заводски районти металлургсемпе машиностроительсем, Смолянкăри химиксем, хулан ытти районĕсенчи ĕççыннисем пынă. Унта республикăри канашлу участникĕсем—Донец бассейнĕнчи, Львов тата Волынь облаçĕсенчи, Александрири горняксем пулнă.

Трибуна çинче—КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ, Украинăри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. И. Кириченко юлташ, СССР Çĕр кăмрăк промышленность министрĕ А. Н. Задемидко юлташ, СССР Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительство министрĕ В. Г. Мельников юлташ, Украина ССР Çĕр кăмрăк промышленность министрĕ А. Ф. Засядько юлташ, Украина ССР Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительство министрĕ Г. В. Красниковский юлташ, республика, область, хула организацийĕсен ертсе пыракан работникĕсем, общественность представителĕсем.

Митинга парти хула комитечĕн секретарĕ А. А. Титаренко юлташ уçать, республикăри канашлăва хутшăннă шахтерсене шахта тăвакансене хулари ĕççыннисен ячĕпе хĕрӳллĕ салам калать.

Украинăри Коммунистсен партийĕн Сталино обкомĕн секретарьне И. П. Казанец юлташа сăмах параççĕ. Вăл КПСС XX съезчĕ хыççăн облаçри ĕççыннисем йывăр индустрие аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттерни çинчен калать. Хальхи вăхăтра облаçра туса кăларакан пĕтĕм продукцин 85 процентне йывăр индустри парса тăрать.

— Пирĕн,—тет Казанец юлташ,—малта пыракан шахтăсемпе трестсем пур, анчах çĕр кăмрăк промышленноçĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, плана тултарса пыраймасть. Канашлура пирĕн ĕçри пысăк çитменлĕхсене уçса палăртрĕç.

Облаçри мĕнпур ĕççыннисен ячĕпе вăл КПСС Центральнăй Комитетне çапла шантарса калать: шахтерсем хăйсем кая юлнине пĕтерĕç, малалла аталанса пыракан халăх хуçалăхĕ валли çĕр кăмрăкĕ нумай кăларĕç.

Трибуна çинче — «Куйбышевуголь» трестăн 10-бис номерлĕ шахтинче ĕçлекен навалоотбойщик М. М. Тарасов юлташ.

— Шахтерсем,—тет вăл,—пирĕн çĕршывра ĕççыннисен малти ретĕнче пулмалла, мĕншĕн тесен вĕсем промышленноçа топливо парса тăраççĕ. Эпĕ çакăн çинчен савăнса пĕлтеретĕп: парти съезчĕ лартнă задачăсене пирĕн коллектив чыслăн пурнăçласа пырать. Çичĕ уйăх çурă хушшинче эпир планран ирттерсе 15 эшелон çĕр кăмрăкĕ патăмăр, хатĕрленӳ ĕçĕсем енĕпе задание чылай ирттерсе пурнăçларăмăр. Кăçал шахтăра государство укçине миллион тенкĕ ытла перекетленĕ.

Унтан «Куйбышевуголь» трестăн Каганович ячĕпе тăракан шахтин начальникĕ А. Я. Данильченко юлташ тухса калать.

— Çĕнĕ пилĕк çуллăх планпа çапла калаçнă: пирĕн çĕршыври горнякĕсен халăх хуçалăхне 593 миллион тонна çĕр кăмрăкĕ памалла. Çав шутра пирĕн шахтăн миллион çурă тонна кăлармалла. Пирĕн предприятири рабочисемпе инженерсем, пурте пĕр кăмăллă пулса пилĕк çуллăх плана срокчен, тăватă çул та ултă уйăхра тултарма йышăнчĕç.

Данильченко юлташ хăйсен коллективĕ йышăннă обязательствăсене пурнăçлас ĕçре тунă пĕрремĕш çитĕнӳ çинчен пĕлтерет: çулталăк пуçланнăранпа коллектив планран ирттерсе 24 пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларнă. Оратор кая юлнă шахтăсен коллективĕсене хăйсен мĕнпур резервĕсене мобилизацилеме, çĕр кăмрăк енĕпе государство умĕнчи парăма вĕçĕ срокра парса татма, государство планĕсене хулари мĕнпур предприятисем пурнăçласа пымалла тума чĕнет.

Малалла Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарьне Н. С. Хрущев юлташа сăмах параççĕ. Ăна Донбасс столицинчи ĕççыннисем ăшшăн кĕтсе илнĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕ ячĕпе Н. С. Хрущев юлташ Донбасс горнякĕсене хĕрӳллĕн саламлать, вĕсен паттăрла ĕçĕсене пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăни çинчен калать.

Н. С. Хрущев юлташ пирĕн çĕршыв промышленноçĕпе ялхуçалăхĕ паха çитĕнӳсем туни çинчен каласан, митингри халăх тăвăллăн алă çупать. Н. С. Хрущев юлташ çакна çирĕппĕн шанса тăни çинчен калать: Донбасри ĕççыннисем, пуринчен малтан шахтерсем, улттăмĕш пилĕк çуллăх планĕсене ăнăçлă пурнăçлама пĕтĕм вăя хурса тăрăшса ĕçлĕç, промышленноçпа ялхуçалăхне малалла вăйлатас, совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатас, унăн культурине ӳстерес ĕçе хăйсене тивĕçлĕ вăй хурĕç. Хăйĕн сăмахĕн вĕçĕнче Н. С. Хрущев юлташ марксизм-ленинизм ялавне çӳле тытса пыма чĕнет.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине чысласа каланă саламлă сăмахсем илтĕнеççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсен спартакиадинчи çĕнтерӳçĕсене СССР Министрĕсен Совечĕн парнисене пани

Августăн 17-мĕшĕнче Кремльти Пысăк двореца Георгиевски залĕнче Совет Союзĕнчи халăхсен спартакиадинче çĕнтернĕ командăсене СССР Министрĕсен Совечĕн парнисене панă.

Спартакиада итогĕсем çинчен ăмăртусен главнăй судьи К. А. Андрианов пĕлтернĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕ хушнипе СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ Н. Н. Романов РСФСР (Мускав) командине пĕрремĕш парне—хрусталь кубок—панă. Çавăн пекех иккĕмĕш вырăн йышăннă РСФСР командине (облаçсен, крайсен тата автономлă республикăсен сборнăй командине), виççĕмĕш вырăна тухнă Ленинград спортсменĕсене СССР Министрĕсен Совечĕн парнисем—хрусталь кубоксем панă.

Георгиевски зала пухăннă спортсменсем—спартакиада участникĕсем, совет общественноçĕн представителĕсем çĕнтерӳçĕсене—чаплă совет спортсменĕсене хĕрӳллĕн саламланă. (ТАСС).

ССР Союзĕнчи халăхсен спартакиадин итогĕсем

Мускав, РСФСР тата Ленинград командисем СССР Министрĕсен Совечĕн парнисене илнĕ

Августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа 16-мĕшне çитиччен Мускавра ССР Союзĕнчи халăхсен спартакиади пулса иртрĕ. Спартакиада мĕнле пынине миллионшар совет çыннисемпе урăх çĕршывсенчи нумай çынсем тимлĕ сăнаса тăчĕç.

ССР Союзĕнчи халăхсен спартакиади вăл—пирĕн çĕршыври спортсменсен пурнăçĕнчи пысăк событи. Спартакиадăна хатĕрленнĕ тапхăрта 17 миллион çын ытла хăйсен ăсталăхне Мускавра кăтартма хисеплĕ право илесшĕн массăллă ăмăртусене хутшăнчĕç. Физкультура коллективĕсенчи, районсенчи, облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи ăмăртусенче нумай çамрăксем хăйсен ăсталăхне кăтартрĕç. Çак кунсенче вуншар пин çамрăксем спорт коллективĕсемпе секцийĕсене çырăнчĕç.

Спартакиадăн финалти ăмăртăвĕсене 9.244 спортсмен хутшăннă. СССР Министрĕсен Совечĕн парнисемшĕн мĕнпур союзлă республикăсен командисем кĕрешнĕ.

Спартакиадăра 21 тĕрлĕ спорт енĕпе ăмăртусем пулнă. Пирĕн чи лайăх спортсменсен кĕрешĕвĕ питĕ интереслĕ иртнĕ.

ССР Союзĕнчи халăхсен спартакиадин итогĕсем мĕнле-ха?

Спартакиадăра пĕрремĕш вырăна РСФСР (Мускав) команди тухнă. Иккĕмĕш вырăна РСФСР-ти облаçсен, крайсен тата автономлă республикăсен сборнăй команди, виççĕмĕш вырăна Ленинград команди йышăннă. Çак виçĕ команда СССР Министрĕсен Совечĕн парнисене илме тивĕçлĕ пулнă.

Тăваттăмĕш вырăнта Украина ССР команди, пиллĕкмĕш—Грузи ССР, улттăмĕш—Эстони ССР, çиччĕмĕш—Белорус ССР, саккăрмĕш—Латви ССР, тăххăрмĕш—Армян ССР, вуннăмĕш—Азербайджан ССР, вун пĕрмĕш—Узбек ССР, вун иккĕмĕш—Литва ССР, вун виççĕмĕш—Казах ССР, вун тăваттăмĕш—Молдаван ССР, вун пиллĕкмĕш—Туркмен ССР, вун улттăмĕш вырăнта—РСФСР (Карел АССР), вун çиччĕмĕш вырăнта — Киргиз ССР, вун саккăрмĕш вырăнта Таджик ССР командисем.

ССР Союзĕнчи халăхсен спартакиади союзлă республикăсенчи физкультурниксен çитĕнĕвĕсене уççăн кăтартса пачĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ спартакиадăра спортсменсен пĕрремĕш разрячĕн нормисемпе спорт мастерĕн нормисене тултарчĕç.

Латви баскетболисчĕсен хăйлă команди спартакиада чемпионĕпе çĕршыв чемпионĕ ятне илчĕ, Армян ССР спортсменĕсем вара кучухнехи пятиборье енĕпе ирттернĕ ăмăртусенче пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç.

Украинăри арçынсен команди волейбол енĕпе ирттернĕ ăмăртусенче пĕрремĕш вырăна тухрĕ, хĕрарăмсен команди вара çак спорт енĕпех иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Спартакиадăра Грузи ССР-ĕнчи çамрăк спортсменсем чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç. Грузи команди ирĕклĕ кĕрешӳ, шывра мечĕкле выляс тата футбол енĕпе иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Балтика тăрăхĕнчи республикăсен командисем паллă çитĕнӳсем турĕç. Латви физкультурникĕсем — волейбол, йывăр атлетика, тĕл перес, баскетбол енĕпе (хĕрарăмсем) чи лайăх ултă команда шутĕнче, Эстони спортсменĕсем ирĕклĕ кĕрешӳ, ултă спорт, теннис енĕпе виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Баскетбол енĕпе Литва спортсменĕсем — арçынсем виççĕмĕш вырăна, хĕрарăмсем вара тăваттăмĕш вырăна тухрĕç.

Узбекистан, Киргизи тата Туркмени командисем ултă спорт енĕпе чи лайăх ултă команда шутĕнче пулчĕç, Казахстан спортсменĕсем — бокс, баскетбол тата кучухнехи пятиборье енĕпе.

Спартакиада вăхăтĕнче союзлă республикăсен 355 çĕнĕ рекордне тунă.

ССР Союзĕнчи халăхсен спартакиадинче Пĕтĕм Союзри 33 çĕнĕ рекорд тунă. Вĕсенчен вуннăшĕ тĕнче рекорчĕсенчен малта тăраççĕ.

Спартакиадăри ăмăртусем вăхăтĕнче спорт мастерĕн 445 результатне кăтартнă. Çĕнĕрен 189 спортсмен «ССР Союзĕн спорт мастерĕн» нормине тултарнă.

Спартакиада итогĕсене пăхса тухса, судьясен главнăй коллегийĕ çакна палăртать: хăшпĕр йышши çăмăл атлетика енĕпе тата шывра ишекенсен ăмăртăвĕ енĕпе результатсем вăйсăр пулнă. Кунта арçынсем хушшинче вăтам дистанцисене, барьерлă çулсемпе чупса тухас, нисçете сиксе, диск ывăтас, çӳле сиксе тĕлĕшпе, хĕрарăмсем хушшинче сăнăпа диск ывăтас тĕлĕшпе ирттернĕ ăмăртусен результачĕсем çинчен сăмах пырать. Пятиборье, шывра ишес тата велосипед спорчĕ енĕпе ирттернĕ ăмăртусене хутшăннă чылай спортсменсен результачĕсене [illegible] тесе йышăннă.

Ăмăртусем мĕнле пынине 1.322 судья сăнаса тăнă.

Мускавра совет спортсменĕсем хăйсем нумай тĕрлĕ спорт енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунине кăтартса пачĕç. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн çĕршыври çамрăксене физически воспитани парассишĕн тăрăшни çине ĕçпе ответлерĕç. (ТАСС).

Васкамасăр, ерипен

«КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ» ИШЛЕЙ РАЙОНĔНЧЕ

ВĂРЛĂХ АНА ÇИНЧЕХ ЮЛАТЬ

Тухăçра сарă хĕвел пĕртак курăнчĕ те, хура пĕлĕтсем хыçне сухалчĕ. Уйчиен те пулмарĕ çумăр пĕрĕхме пуçларĕ, тепĕр самантран таврари çанталăк ваххех юшанчĕ. Хăшĕ çилпе уй-хирти тырпул хумханса кайчĕ. Кĕр енчелле сулăннă кунсенче кашни сехет хаклă — уяр çанталăкра хирти тырпула хăвăртрах пухса кĕртмелле те çийĕнчех авăн çапмалла. Вăхăчĕ çапла. Кĕрхи кун нумай кĕттермест—пур ĕçре те васкамалла. Ял ĕçченĕсем çапла тума тăрăшаççĕ те. Анчах Ишлей районĕнче уй пек мар.

Калинин ячĕпе тăракан колхозри тăваттăмĕш бригада уйĕнче унта-кунта пĕрер-икшер çын курăнкалать. Хĕрарăмсемпе вĕтĕр-шакăр ачасем тулă выраççĕ. Тулли сайра та лутра. Апла пулин те ĕçчен аллăллă хĕрарăмсем ăна пĕрер пĕрчĕн пуçтараççĕ. Вырма юрăхлă çĕртине çурлапа выраççĕ, лутра вырăнтине тымарĕ-мĕнĕпе кăкласа кĕлтесем çыхаççĕ.

— Кая юлса тухрăмăр. Халĕ, акă, тĕкĕнме хăрамалла, шăпăртатсах тăкăнать,—тет выракансенчен пĕри.

Чăн та, ана çинче, вырнă çĕрте те, вырманни çинче те шап-шурă тулă выртать. Кашни тăваткал метр çинче 250—300 пĕрчĕ! Ку уйра кашни гектар çинче пĕрер центнер ытла тырă юлать. Тен, колхоз руководителĕсем çак тăкака курман, тейĕр. Çук, уй пек мар. Колхоз председателĕ Андреев юлташ уй çинчен хăй те аван пĕлет.

— Кăçалхи тулă пур çĕрте те тăкăнать. Çанталăк çапла тăчĕ,—ăнлантарать вăл хăйне хăй.

Хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче вăйпитти çынсем кам ăçта пĕлет, çавăнта «ярăнса» çÿреççĕ. Вĕсене уя илсе тухасси çинчен председатель шухăшламасть.

— Унтан нимĕн тĕлĕнмелли те çук,—теççĕ тырă выракансем. — Пирĕн колхозра йăли çапла: ĕçе кам тухас тет, çав тухать. Тухни—тухнипе, тухманни—тухманнипе.

— Бригадир мĕншĕн ĕçе йĕркелесе ямасть, унăн хăть тĕрĕслесчĕ.

— Виç-тăватă кун курман ăна. Тĕрĕсси, Хĕветĕс аппа бригадира иртнĕ кас ĕçкĕре курнă, теççĕ,—каласăва хутшăнать тепри.

Тырă выракансем хăйсен бригадирĕ çинчен питĕ пăшăрханса каласа пачĕç. Пăшăрханма сăлтавĕ пур. Максим Яхваров бригадир уя тухса курмасть, ĕçкĕрен ĕçкĕне кăна ярăнса çÿрет. Çавăн пиркиех хĕрарăмсенчен кашниех хăй валли касалăк уйăрса илет, вĕсен ĕçне йышăнакан та çук. Тăват-пилĕк кун каялла ыраш вырса пĕтернĕ, анчах кам мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине пĕлмеççĕ: вырнă лаптăка хăй те виçмен. Колхозниксем ĕçкунĕсен минимумне ытлашшипех тултарасшăн, ĕçлесшĕн, анчах ĕçе шута илменни ытти тарăхтарать.

— Ку бригадирпа çавăнса ĕçлени пулмарĕ.

Колхоз председателĕ С. К. Андреев юлташ М. Яхваров бригадир ĕçе апăхтарса яни çинчен пĕлмест мар.

— Виçĕ кун каярах Яхваров çинчен правленипе çÿтсе ярăмăр. Ним те тăваймастпăр,—тет вăл. — «Ĕçке ерсе кайрăм, хам та антрарăм» терĕ вăл правленире.

М. Яхваров бригадир хăй мĕнле майпа ĕçке ерниччен хăй те тĕлĕнет пулĕ?!

Çапла вара, пĕтĕм ĕçе пĕсса пыракан пĕр çынна колхоз правленийĕ те, пуçлăмăш парторганизаци те нимĕн те тăваймасть. Вĕсене уйра тулă тăкăнни хумхантармасть.

КАМ—ĔÇРЕ, КАМ—КАМПАРА

Калинин ячĕпе тăракан колхозра çеç мар, ытти ялхуçалăх артелĕсенче те тырă тăкăнать. Ытти колхозсенче те пĕрисем—хирте, теприсем—килте.

«Герой» колхоз районти пĕчĕк колхозсенчен пĕри. Кунта ыраш вырма уйăх каярах тухнă, анчах паян кунта çитсе те вырса пĕтермен. Халĕ, тырра ана çинех тăкса хăварас мар тесен, юлнă лаптăксене вырса пăрахмалла ĕнтĕ. Ĕçе юрататкан кашни çынах çапла тăвать те. Кунти хăшпĕр çынсем вара тырă вырас вырăнне харпăр хăй валли хăмăл çулаççĕ. Вĕсемшĕн: хăмăл усăллăрах, тырă тăкăнтăрах.

— Ăçта председатель?

— Шупашкара тухса кайрĕ.

— Парторганизаци секретарĕ тата?

— Секретарь-и? Ефрем Филиппович Филиппов-и? Вăл кăмпара, Атăл леш енче. Кайни виçĕ кун çитрĕ ĕнтĕ, катка тултармасăр килместĕп терĕ. Кайран, акă, турттарса килме лаша ярса пама ыйтĕ.

Виçĕ кун каярах, колхозри ĕçе йĕркелеме пулăшас тесе, райисполкомпа парти райкомĕн представителĕ Андреев, КПСС райкомĕн ку зонăри инструкторĕ Максимов парторганизаци пухăвĕ ирттерме пынă, анчах вăл пухăва тĕлне Филиппов юлташ кăмпа пухма тухса тарма ĕлкĕрнĕ, пуху та пулман. Халĕ акă районтан килнĕ çынсем нимĕн те тăваймаççĕ. Филиппов колхозри паллă çын: парторганизаци секретарĕ кăна мар, ревкомисси председателĕ те. Колхозри арçынсен çулталăкне 250 ĕçкунĕнчен кая мар тумалла, Филиппов халлĕха 60-тан иртермен. Вăл колхоз сахăнче хуралçă пулса ĕçлет, хуралпа вырăнне садра çулнă утта хăй килнелле ытларах туртать.

Парторганизаци секретарĕ çавăн пек хăтланнă хыççăн колхозниксем ыраш вырас вырăнне хăйсем валли хăмăл çулнинчен тĕлĕнмелли çук ĕнтĕ. Хăшпĕрисем çемйи-çемйипе аякра ĕçлесе пурăнаççĕ. Сăмахран, Н. Астраханцев, А. Яранов çемйисем чугун çул çинче ĕçлеççĕ, колхозпа вĕсене авкарти кăна çыхăнтарать. Нил Тихонов, Шупашкарти пединститутра заочно вĕренекенскер, «апă вĕренетĕп», тесе, икĕ çул хушши арăмĕпе пĕрле пĕр ĕçе те тухмасть, кунамăшĕн вара икĕ кахалшăн тар юхтарса ĕçлеме тивет.

— Порфирий Петрова эпир шутлă çын тесеччĕ. Вăл та уй пек пулмарĕ,—тет колхоз счетоводĕ.—Заготзернонран кăларса ярсан колхоза килсеччĕ. Ялалăхах алта вырнаçрĕ ĕнтĕ ку, терĕмĕр. Мĕн тăвас тетĕн, аякка пăхать вĕт, пĕр кун та колхозра ĕçлестĕн мар. Малтан пĕртак канатăп-ха, терĕ. Антив кантăр, служащире пурăнса ывăнса та çитнĕ пулĕ. Уйăх та иртнерĕ, пăхатăп та, хайхи Порфирий Заготзернона ĕçе кĕме ĕлкĕрнĕ те. Арăмĕ те ĕçлемест.

Счетовод каласăвĕ пире тарăн шухăша ячĕ. Ирĕксĕрех Владимир Ильич ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ходяшов юлташ каласа панине аса илтĕмĕр. Ку колхоз çыннисем—пурĕ 10 çын—пĕлтĕр Шупашкарта е чугун çул çинче ĕçленĕскерсем, халĕ КПСС XX съезчĕн решенийĕсене ăнăçлă пурнăçлама пулăшас тĕллевпе тăван яла таврăннă. Вуниккĕш те тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен пĕри Зубков юлташ, Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче мастер помощникĕ пулнăскер, халĕ весовщик пулса ĕçлет. Тăван яла таврăнса, халăхпа аллă-аллăн тытса ĕçлесе колхоз пуянлăхне ÿстерме тăрăшни савăнтарать кăна. «Герой» колхозра вара пачах урăхла. Кунти чиховсемпе петровсем колхозра ячĕшĕн кăна шутланса тăни, авкартипе усă курни, тÿрĕ кăмăллă ял çыннисене тарăхтарать.

Ĕç дисциплини япăх пулнине, колхоз руководителĕсемпе пуçламăш парторганизацисем массăсене пĕлсе ертсе пыманнине пула тырпул пухса кĕртес ĕç районти ытти чылай колхозсенче юлса пырать. Хрущев ячĕпе тăракан колхозра кĕрхи тырăсене халĕ те вырса пĕтермен, сурăхсем пулса çитнĕ, тулă тăкăнать. Ыраш акмаççĕ. «Знамя коммунизма» колхозра та тăкаксем нумай.

КПСС Ишлей райкомĕ колхоз руководителĕсене, парторганизацисене массăлла ĕçе организацилеме пулăшмасть.

— Тепĕр çынна ăна тĕплĕн ăнлантарса паратăн, вăл ĕçлет вара. Каласа памасан, хăнк та тумасть,—тет Владимир Ильич ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Михаил Степанович Ходяшов. — Пирĕн пата райком инструкторĕсем килмеççĕ теме çук, килеççĕ. Анчах вĕсене никам та кирлĕ мар, сводкăсем кăна ыйтаççĕ. Пирĕн зонăри инструктор Демидова çур сехетрен ытла пихсан та пулмасть.

— Райком секретарĕсем те час-часах килеççĕ,—тет вăл малалла.—Пулăшмаççĕ теме çук. Комбайн пирки Дмитриев юлташ хăй ыйту татса пачĕ: хăш-хăш колхозра ĕçлемеллине палăртрĕ.

— Лекцисемпе докладсем вуласа параççĕ пулĕ тата?

— Çук, уй пекки эп астăваса пулман. Августра лекци ирттерме палăртрăмăр: райком секретарьне мар, пĕр-пĕр лектора тупса килсен юрĕччĕ хăть...

УЙРА МАШИНА КĔРЛЕНИ ИЛТĔНМЕСТ...

Калинин ячĕпе тăракан колхоз итемĕ çинче МТС-ăн икĕ машини ларать: «МК-1100» молотилкăпа «С-4» комбайн. Уяр çанталăк, кăнтăр кунĕ пулсан та, вĕсенчен пĕри те ĕçлемест.

— Темскер çĕмĕрĕлнĕ çак молотилкăн,—тет Мария Степанова электросварщица, МТС-ран ятарласа машинăпа килнĕскер,—никам та çук уй патĕнче.

Диспетчер электросварщицăна колхоз итемĕ çине янă, анчах унта молотилкăпа ĕçлекенсенчен никам та çук. МТС халĕ те машиновед уйăрман-ха. Степановăн молотилкăна часрах юсаса; виççĕмĕш бригадăна комбайн патне васкамалла.

«С-4» комбайн патĕнче те виççĕн тăрмашаççĕ: вĕсем татăлса кайнă элеватор транспортерне туртса кăларасшăн.

— Кăçалхи пек тырă вырнине астумастăп. Иртнĕ çулсенче ялан малта пыраттăмăр,—тет Кузьмин комбайнер.—Кăçал списокра варрине лексен юратчĕ. Ăçтан ĕç ăнтăр вăл—пĕрре çаврăнатăн та чарăнатăн. Ыраш вырнă вăхăтра кашни кун МТС-а утма тиврĕ вĕт. Мана уй тухиччен «60-205» подшипник кирлĕ пулсаччĕ, кашни кун ыйтсан та памарĕç. Канаша та килмен, теççĕ. Юлашкинчен, ыраш пĕтерес умĕн: Таганрогран вертолетпа илсе килеççĕ, тесе сÿйма тытăнчĕç. Уй пек суйса пурăннипе ăçтан ĕç кайтăр. Подшипник çукнипех сĕçĕ татăлса кайрĕ, уй пирки те пĕр кун ĕçсĕр ларма тиврĕ.

Ĕçлес тесен çынна, ĕçе тĕплĕн тума юратакан çынна ĕçсĕр ларни чăнах та кÿрентерет ĕнтĕ. Çавăнпа та Кузьмин хăй кăçал пĕлтĕрхи пек 400 гектар мар, 130 гектар çеç вырнăшăн ÿпкелешет.

— Комбайнăн нумай пайĕсем çитмен пулсан та çуркунне МТС-ăн главнăй инженерĕ Хоботов «пойдет» тесе хучĕ. Халĕ акă «пойдет» пулчĕ. Элеватор транспортерĕн скребокĕсене те паян тин ярса пачĕç. Халĕ тин антăранастăп ĕнтĕ, тырă вырса пĕтерни çĕре пур пайĕсем те вырăнта пулассĕ,—тет вăл чеен кулса.

Толстов комбайнер «Герой» колхозра пĕр кут çаврăнчĕ те вырма пăрахнă. «Ял коммунизм» колхоза, хăй çуралса ÿснĕ яла тухса кайнă. Вăхăтра вырман чирки тырă тăкăнма пуçланă.

Чылай колхозсем государствăна тырă парассипе вăраха яраççĕ, район ку тĕлĕшпе плана сурринне кăна тултарнă. Итемсем çинче çапнă тырă капăлĕсем нумай, анчах вĕсене çийĕнчех ăсăрса тасатмаççĕ, тасатнине те ăсатма васкамаççĕ.

Тырпула вăхăтра пухса кĕртес тесен, ишлейсен пĕтĕм вăя хумалла. Вăхăт кĕтмест!

П. КРЫСИН.
Н. ГЕРАСИМОВ.

Ÿкерчĕкĕ Н. Яковлевăн.

Çамрăксене ФЗО тата сăрт-ту промышленность шкулĕсене вĕренме илеççĕ

СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен Главнăй управленийĕн шкулĕсемпе училищисем пирĕн çĕршыври промышленность, транспорт тата стройкăсем валли ăста рабочисем вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ФЗО шкулĕсемпе Ĕç резервĕсен училищисемшĕн кулленех тăрăшаççĕ. Ĕç резервĕсен шкулĕсен воспитанникĕсем пĕтĕмĕшпех государство шучĕпе вĕренсе пурăнаççĕ. Вĕсене тÿлевсĕр апат çитереççĕ, тумлантараççĕ. Вĕреннĕшĕн, общежитире пурăннăшăн, кĕнекесемпе тата вĕренÿ пособийĕсемпе усă курнăшăн пачах тÿлеттермеççĕ. Практикăлла занятисенче ĕçленĕшĕн вĕренекенсене укçа тÿлеççĕ. ФЗО шкулĕсемпе ремесла тата чугун çул училищисене вĕренсе пĕтернĕ çамрăк рабочисене предприятисене ĕçлеме янă чухне аванс шучĕпе 300 тенкĕ укçа параççĕ, вĕсене специальноçпа разряд тăрăх ĕçе хăвăрт вырнаçтараççĕ. Предприятие ĕçе пынă çамрăк рабочисене лайăх общежитисене вырнаçтарнипе пĕрлех, выртса тăмалли япаласем параççĕ.

Производствăра ĕçленĕ вăхăтрах çамрăк рабочисем хăйсен пĕлĕвĕсене шкулсемпе техникумсенче тата аслă шкулсенче вĕренсе ÿстерме пултараççĕ. Хальхи вăхăтра ФЗО шкулĕсемпе Ĕç резервĕсен училищисенчен вĕренсе тухнă çĕршер пин çамрăк производствăра опытлă мастерсем пулса тăчĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ çинчен ырă ят çÿрет. Токарь-скоростник Ю. Дикон, çĕр кăмрăк кăларакан комбайн машинисчĕ П. Трефелев тата ыттисем Сталинла преми лауреачĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Пирĕн çамрăксем ФЗО шкулĕсемпе Ĕç резервĕсен училищисене хапăл тусах вĕренме каяççĕ, лайăх професси туяççĕ. Чăваш республикинчи чылай çамрăксем, ФЗО тата сăрт-ту промышленность шкулĕсене вĕренсе пĕтернĕскерсем, халĕ Кемерово, Челябинск облаçĕсенчи тата Коми АССР-ĕнчи предприятисенче ăнăçлă ĕçлеççĕ. Акă, П. Изыков юлташ (Комсомольски районĕнчен), Киселевск хулинчи ФЗО шкулĕнче лайăх паллăсемпе вĕреннĕскер, халĕ шахтер пулса ĕçлет. В. Мурнин (Шупашкар районĕнчен), Д. Корняков (Шăмăршă районĕнчен) комсомолецсем Киселевск хулинчи стройкăсенчен пĕринче каменщик-печник пулса ĕçлеççĕ. Вĕсен уйăхри пĕтĕм ĕç укçи 1.000 тенкĕрен кая мар шутланать.

Кăçалхи август уйăхĕнчен пуçласа сентябрĕн 25-мĕшĕччен Коми АССР-ĕнчи ФЗО тата сăрт-ту промышленность шкулĕсене вĕренме илмелли черетлĕ призыв пуçланать. Çак шкулсене 1938—1939 çулсенче çуралнă, лайăх сывлăхлă çамрăксене илеççĕ.

Призыв ĕçне йĕркелеме вырăнсенчи совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсем активлă хутшăнас пулать. Вĕсем колхозсемпе поселоксенчи, хуласенчи çамрăксем хушшинче ФЗО тата сăрт-ту промышленность шкулĕсене вĕренме каясси пирки ăнлантару ĕçне анлăн туса пыма тивĕçлĕ. Райсовет тата хула Совет исполкомĕсем çамрăксене Коми АССР-ĕнчи ФЗО тата сăрт-ту промышленность шкулĕсене вĕренме илмелли призыва ăнăçлă тата палăртнă вăхăтра ирттерессишĕн тăрăшмалла.

А. ГОРДЕЕВА.

Пăс трубисем хываççĕ

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн пăспа ĕçлекен электростанцийĕнчен пуçласа трактор пайĕсем тăвакан завод патне çитиччен экскаваторсемпе чавса тунă траншея тăсăлса выртать. Унăн тăршшĕ икĕ километра яхăн, сарлакăшĕ—виçĕ метр. Халĕ унта строительсем ĕçлеççĕ. Н. Максимов юлташ ертсе пыракан çĕр чавакансен бригади канала трубасем вырнаçтарса лартма бетонран пиккĕс хывма пуçласа тухать, компенсаторлă нишăсем, сăлсем чавать. Бригада плана кашни уйăхрах тултарса пырать. Час-часах çумăр çăвать пулин те, ĕç чарăнса тăмасть.

Çĕр чавакансем хыççăн каменщиксем пыраççĕ. 889-мĕш УНР-ти малта пыракан бригадăри (бригадирĕ А. Андреев юлташ) А. Марков, З. Маркиянов, В. Тихонов каменщиксем сменăра 900—1.000 кирпĕч купаласа нормăна иртерсе тултараççĕ. Строитель ĕçне вĕренекенсен пысăк ушкăнĕ те тăрăшса ĕçлет, вăл вуншар пин кирпĕч купаланă.

Трубасене хума ятарласа 8 çынтан тăракан бригада организациленĕ. Ăна А. Никифоров юлташ ертсе пырать. Бригадăри В. Скворцов, Г. Семенов, Гаврилпа Геннадий Никитинсем хăйсен ĕçне лайăх вĕренсе çитнĕ, трубасене питĕ тĕрĕс хурса тухаççĕ. Вĕсем халĕ икĕ километр ытла трубасем хывнă. Пысăк диаметрлă труба тăрăх завод ăшă пăс илсе тăракан пулать, пĕчĕк труба тăрăх конденсированнăй шыв каялла электростанцие кусать.

Я. ПРОКОПЬЕВ.

Редакцие килнĕ çырусем

Ялхуçалăхне электрификацилес ыйту пирки

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ялхуçалăхне электрификацилес ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ. Электричество энергийĕпе усă курни ялхуçалăхĕнче ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать. Çавна шута илсе, КПСС XX съезчĕ çапла йышăнчĕ: улттăмĕш пилĕкçуллăхра МТС-семпе совхозсене пурне те электрификацилесе çитермелле, электричество энергийĕпе усă куракан колхозсен хисепне вара икĕ хут ÿстермелле.

Пирĕн республикăра съезд кăтартса панисене пурнăçлама паха майсем пур. Пир-авăр комбиначĕ çумĕнчи электростанцие ĕçе янă хыççăн, Шупашкарти электростанцисен çывăхри колхозсене энерги парса тăма пултараççĕ. Улатăр хулинче пысăк электростанци лартаççĕ. Кăçал унти пĕр турбинăна ĕçе яраççĕ. Çак электростанци колхозсене чылай энерги пама пултарать. Канашри тата Çĕмĕрлери электростанцисем те колхозсене хальхинчен нумайрах энерги пама пултараççĕ. Апла пулин те тивĕçлĕ организацисем колхозсене электрификацилеме васкамаççĕ.

Республикăра «Главсельэлектростройăн» строительствăпа монтаж кантурĕ пур. Унăн машинăсемпе механизмсем çителĕклĕ, 1955 çулхи плана вăл ăнăçлă тултарчĕ, планран иртерсе 200 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

Кăçал вара кантур ĕçĕ чылай кайсăрланчĕ. Çичĕ уйăх хушшинче вăл çулталăкри плана 45 процент çеç тултарчĕ. Çакă вăл заказчиксем договорта палăртнă ĕçсене пурнăçлама ÿркăшманнинчен те килнĕ. Кăçал государство Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн электростанцийĕнчен Çĕрпÿ, Красноармейски тата Чурачăк районĕсене çити лини карма укçа-тенкĕ уйăрса панă. Çав укçа-тенкĕпе япăх усă кураççĕ-ха. Çичĕ уйăх хушшинче строительствăпа монтаж ĕçĕсен çулталăкри планне 2,7 процент çеç тултарнă.

Кирлĕ пек лини карма строительствăпа монтаж кантурĕн услови çук. Кантур хушма предприяти валли çурт та та локомобиль лартасшăн. Анчах çакна пурнăçлама ăна çĕр уйăрса памаççĕ. Пир-авăр комбинатĕн электростанцийĕ çывăхĕнче трансформатор подстанцийĕ лартмалла. Асăннă ĕçсене тума Шупашкар районĕнчи «Родина» колхоз çĕрне касса илмелле. Ку ĕçе заказчикăн—Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин электростанцисене эксплуатацилекен кантурĕн кăçалхи 1-мĕш кварталтах йĕркелесе çитермелле пулнă. Анчах кантур начальникĕ А. Настенко юлташăн савăнăçсăрлăхне пула çак ыйтăва ытла та кая юлса татса панă.

Тивĕçлĕ лини карма алюмини провочĕ тата изоляторсем çук. Вĕсене РСФСР Хула тата ял строительство министерстви уйăрса памалла.

Кăçал Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи 32 колхоза электричество кĕртмелле. Вĕсене те Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн электростанцийĕ электроэнерги парса тăмалла. Çакна пурнăçлама колхозсем ятарласа совет организациленĕ. Совет «Главсельэлектростройăн» республикăри строительствăпа монтаж кантурĕпе договор тунă. Договор тăрăх колхозсен юпасем лартма пĕр пин кубометра яхăн йывăç турттарса кăлармалла. Çичĕ уйăх хушшинче пурĕ те 80 кубометр çеç турттарса кăларнă, Атăл леш енче тата 200 кубометра яхăн юпа пур. Совет председателĕ Г. Свинцов юлташ договора пурнăçлама, колхозсене хăвăртрах электрификацилеме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

Ивановăри кирпĕч заводĕнче виçĕ локомобиль тата пĕр дизель вырнаçтарса лартнă. Апла пулин те электроэнерги çителĕклĕ мар, топливо нумай кирлĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсене электрификацилеме каракан лини çак заводран инçе мар. Çапла вара завода электрификацилеме çăмăл. Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленийĕн руководителĕсем (начальникĕ М. Репкин юлташ) завода электрификацилесси çинчен нумай калаçаççĕ, анчах нимĕн те тумаççĕ. Управлени ултă тонна провод тата 100 кубометра яхăн юпа уйăрса памалла, чăннипе нимĕн те паман. Çавăнпа лини валли юпасем лартас ĕç чарăнса ларнă.

Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсене электрификацилеме Шупашкарти электростанци патĕнче 560-шар киловольтамперлă икĕ трансформатор лартмалла. Трансформаторсене кÿрсе килнĕ, вĕсенчен пĕрне вырнаçтарса лартнă. Ивановăри кирпĕч заводне электрификацилесе пулсан, çак трансформаторсен хăвачĕ çителĕксĕр. Строительство материалĕсен тăвакан промышленность управленийĕн хăватлăрах, 1.000 киловольтамперлă трансформатор тупса памалла. Ку тĕлĕшпе те управлени васкамасть.

«Главсельэлектростройăн» Чăваш республикинчи строительствăпа монтаж кантурĕн кăçал Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи электростанцирен хулари коммунальнăй электростанцие çитиччен çĕр айĕнче кабель хывмалла. Заказчик—коммунальнăй электростанци (директорĕ И. Благодатских юлташ) подрядчика техсем хатĕрлесе памасть, çавăн пирки кабель хывма пуçăнман та.

Асăннă тĕслĕхсем строительствăпа монтаж кантурĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем çукки пĕлтермеççĕ. Унăн руководителĕсем К. Семьянова Д. Седихов юлташсем заказчиксен савăнăçсăрлăхне килĕшсе тăраççĕ, вĕсене договорта палăртнă пек ĕçлеме хистемеççĕ.

В. ДАНИЛОВ.

Çĕр мамăкĕ йышăнма хатĕр мар

Кĕр çывхарса килет. Часах Шупашкарти пир-авăр комбинатне çĕр мамăкĕ кÿрсе килме тытăнаççĕ. Кунта çĕр мамăкĕ хума складсем çителĕксĕр, темиçе тонна «шурă ылтăн» ниçкартишĕнчех выртать. Çĕнĕрен кÿрсе килекеннине ăçта хума шутлаççĕ-ши комбинат руководителĕсем?

Çуркунне 123-мĕш стройтрестăн 891-мĕш УНР-ĕ складсен урайне асфальт сарма тата çĕр мамăкне пушатса купалас ĕçе механизацилеме тытăнчĕ. УНР работникĕсем çак ĕçе япăх тата вăраххăн тăваççĕ. Складăн 1-мĕш секцийĕнчи урайне асфальт сарнă. Вăл пĕр уйăх иртсенех юрăхсăра тухрĕ. Иккĕмĕш секцире монтаж ĕçĕсем вăраххăн пыраççĕ.

Çĕр мамăкĕ пушатмалли площадкăра йĕркелĕх çук, чугун çул тăрăх кÿрсе килекен кирек мĕнле япаласене те: çĕр кăмрăкне, цемента, пĕренесене, кирпĕче, хăйăра кунта пушатаççĕ. Çĕр кăмрăк тусанĕпе, цементпа çĕр мамăкĕ вараланать, çапла вара унăн пахалăхĕ чакать.

А. ГРИГОРЬЕВ.

Юписене лартрĕç, пралуксене кармаççĕ

ЙĔПРЕÇ. Кăçалхи февраль уйăхĕнче Ленин ячĕпе тăракан, «Искра» тата «10 лет Октября» колхозсенчи колхозниксен пухăвĕсенче пур колхозниксен килĕсене те радио кĕртме йышăнса хăварчĕç. Чăнах та, радио кĕртме юписене хăвăрт лартса пĕтерчĕç. Анчах та ку таранах çитсе те радио пралукĕсене карман-ха.

Колхозниксем радио кĕртесси çинчен пĕрмаях калаçаççĕ. Хăшпĕрисем «юписем çĕрсе кайсан, тепре çĕнĕрен радио юписем лартсан туса парĕç-ха» тесе тарăхса калаçаççĕ.

Йĕпреç сыхăну уйрăмĕнчен пралуксене хăçан карса парасси çинчен ыйтсан, пирĕн материалсем çук, хăçан радио кĕртсе парасси çинчен республикăри сыхăну управленийĕнчен ыйтса пĕлме пултаратăр, тесе ответлеççĕ.

Çÿлте асăннă колхозсем—районти пысăк колхозсем. Колхозниксем радио хăвăртрах кĕртсе парасса кĕтеççĕ.

Ф. СОЛДАТОВ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„Краеведени музейне пулăшу кирлĕ"

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра июлĕн 7-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Краеведени музейне пулăшу кирлĕ» ятлă статьяра музейăн çитменлĕхĕсене тĕрĕс кăтартса панă. Халĕ унăн ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăннă—краеведени музейăн çуртне юсама 10 пин тенкĕ уйăрса панă. Çакна май кунта строительство материалĕсем (известь, кирпĕч, хăмăш, фанера) туяннă, музейăн тĕп çуртне юсама пуçланă.

Чăваш АССР Культура министерстви РСФСР Культура министерстви умне музей штатне ÿстерме—çĕнĕрен фотограф, художник тата экскурсовод хушса пама ыйту тăратрĕ.

Ытти музейсен опытне вĕренес шутпа кунта ĕçлекенсем вăхăтран вăхăта тĕрлĕ хуласене командировкăна кайса килеççĕ. Кăçал музей директорĕ С. Хайнулин Ленинграда, научнăй сотрудникĕсем: А. Львова Мускава, А. Васильева—Горькине кайса, çак хуласенчи музейсен ĕç опычĕпе паллашнă.

П. КАПИТОНОВ.
Чăваш АССР Культура министрĕ.

Çамрăксен агрегачĕ

Хальхи, хĕрÿ кунсенче МТС-ра та, колхозсенче те Феми Абитов ятне ырăпа асăнаççĕ. Асăннисăр, уй-хиртен тырпул нумайрах пухса кĕртессишĕн пыракан ăмăртура вăл районта пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Вунтăватă кун хушшинче 262 гектар вырнă, 3.480 центнер тырă çапса панă.

...«Правда» колхозра икĕ комбайнпа сурхи тырăсем выраççĕ. Комбайнерĕсем пĕртăван Феми тата Феррах Абитовсем. Феми тытса пыракан комбайн çинче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

— Ялавăн çамрăксен агрегачĕ,—каласа парать колхоз председателĕ В. Хасибанов юлташ.—Тракторисчĕ те, комбайнерĕ те, помощникĕ те—комсомолецсем...

Колхоз руководителĕсене курсан, комбайнер агрегата чарнарĕ, хăй вырăнне помощникне тăратрĕ те çĕре сиксе анчĕ.

[illegible] председатель патне çитсе тăчĕ.

— [illegible] гектар пулать,—терĕ вăл [illegible].

— Апла эсĕ паян та пиччÿнтен иртрĕн,—терĕ председатель. Абитовсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Феррах опытлă комбайнер. МТС-а килнĕ чух малтанхи комбайн штурвалне вăл тытнă. [illegible] комбайнпа çулсерен [illegible] тултарнă. Пĕлтĕр Сталинград облаçĕнче ĕçленĕ, 210 гектар тырă вырса панă. Унтан таврăнсан тăван колхозра татах 211 гектар вырнă.

Феми те пĕлтĕр пиччĕшĕнчен кая юлмарĕ, «С-6» комбайнпа 463 гектар вырса, 4.928 центнер тырă çапса пачĕ, республикăри çамрăк комбайнерсем хушшинче пыракан ăмăртура малти вырăна тухрĕ.

Пĕтĕм вăя, пултаруллăха хурса ĕçлет Феми Абитов. Хире тухма хатĕрленнĕ кунсенче Н. Якупов, Н. Вахитов, комбайнерсемпе пĕрле агрегата ÿсăл меслечĕпе юсанă, «С-6» комбайн вăрăм ÿснĕ тырра чарăнмасăр вырнине шута илсе, агрегат пайĕсене хăшпĕр улшăнусем кĕртнĕ. Елнĕк МТС-ĕнчи А. Миронов комбайнер опычĕпе усă курса, барабан айĕнчи декасен шăлĕсĕр секцине хыçалти шăлĕ секципе улăштарса лартнă. Çĕнĕлле юсаса йĕркеленĕ агрегат мĕнле ĕçленине вырма тухиччен колхоз хирĕнче тĕрĕслесе пăхнă.

Ставрополь крайĕнчи ял ĕçченĕсем чĕнсе калани вуласанах Феми Абитов хăйĕн помощникĕпе канашласа кăçал 500 гектар çинчи тырпула пухса кĕртме сăмах панă. Халĕ комбайнер панă сăмаха пурнăçласа пынишĕн пĕтĕм вăя хурать.

Ĕçре чăрмавсем те пулаççĕ. Вырнă вăхăтра вĕтĕрех ыраш пĕрчисем арпана тухни сисĕнчĕ. Çав çитменлĕхе пĕтерес тесе Ф. Абитов юлташ тырра пĕрремĕш хут тасатакан алăна икĕ сантиметр çÿлĕш хăпарса вырнаçтарнă. Кун хыççăн ыраш пĕрчисем арпана тухми пулнă. Çав меслетпе комбайнер сурхи тырăсем вырнă чухне те усă курать.

Çамрăксен агрегачĕ сурхи тырăсем вырма августăн 7-мĕшĕнче тытăннă. Тăватă кун хушшинче 80 гектар вырса, амбара 500 центнер тулă хывнă. Агрегат пĕтĕм шутпа кашни кун 20 гектар вырать.

— Тухăçлă ĕçлесси комбайнертан кăна мар, агрегатăн мĕнпур коллективĕнчен килет,—каласа парать Феми Абитов юлташ.

Комбайнер помощникĕ Харис Закировпа тракторист Нургали Шарафутдинов юлташсем Канашри механизаторсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Халĕ вĕсем хăйсен ĕçне ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ.

Ф. Абитов юлташ агрегат ĕçне тĕрĕс йĕркелеме тăрăшать. Тырă типĕ кунсенче ĕçе ирхине 5 сехетрех тытăнаççĕ. Кăнтăрла комбайнер апатланнă вăхăтра штурвал умне унăн помощникĕ тăрать, каçхине тĕттĕм пулсан тин ĕç чарăнать. Бункерти тырра та агрегат ĕçленĕ вăхăтрах пушатаççĕ. Колхоз правленийĕ агрегата пĕр чăрмавсăр ĕçлеттерме лайăх условисем туса панă. Çапла икĕ агрегат, талăкра 17—18 сехет ĕçлесе, 20—25 гектар тырă вырать. Хăшпĕр кунсенче татах та тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Августăн 7-мĕшĕнче, сăмахран, 31 гектар çинчи ыраша вырса пухнă.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Чкаловски районĕ.

ПИРĔН ПОЧТА

Енер «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине 40 çыру ытла килчĕ. Ĕçсыннисем тырпул пухса кĕртни, государствăна тырă пани, выльăхсене хĕл касьма хатĕрлени, [illegible] массисем ĕçсыннисене выльăх укçи тÿлени, шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлени тата ытти ĕçсем çинчен те çырса пĕлтереççĕ.

Шăхасан тата Калинин районĕсенчен—нумай çамрăксем Донбасри шахтăсенче ĕçлеме кайма кăмăл туни, Вăрнар районĕнчен—Сăрпелĕнчи Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче колхозниксене аванс шучĕпе тырă пама пуçлани, Алтай крайĕнчен — пирĕн республикăран унта тырпул пухса кĕртме пулăшма кайнă комсомолецсемпе çамрăксем тăрăшса ĕçлени çинчен пĕлтереççĕ.

Хăшпĕр ĕçсыннисем государство пенсийĕ тата ытти ыйтусене ăнлантарса пама ыйтса редакцие çырусем янă.

Республикăри тĕрлĕ вырăнсене тĕрĕслеме янă çырусемпе жалобăсем тăрăх пĕр кун хушшинче 5 учрежденипе организацирен ответ килчĕ. Етĕрне районĕнчи район центрĕнчи хăшпĕр учрежденисен çурт, чăлăм юхăнни çинчен çырнă материала редакци ыйтнипе КПСС Етĕрне райкомĕ тĕрĕслесе тухрĕ. Парти райкомĕ çырура асăннисем тĕрĕс пулни, учрежденисемпе хула Совет исполкомĕн çурт управленине хĕле хатĕрленнĕ май çуртсене юсаса çитерме хушни çинчен пĕлтерет. Ытти учрежденисемпе организацисен руководителĕсем те, пĕтĕмĕшпе илсен, çырусемпе жалобăсенчи фактсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтереççĕ.

Литературăпа искусство

Çĕнĕ сезон умĕн

Геройсен характерне тĕрĕсрех, тулликрех уçса пани кирлĕ

Халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисен социализм тăвассишĕн мĕнле кĕрешнипе совет çыннисене пĕлтерешлĕ театрсен паракардĕ ĕçĕ пулса тăрать. Çакна шута илсе, Чăваш Государство Академи театрĕ те хăйĕн репертуарне Польша драматургĕ Ежи Лютовский çырнă «Кам айăплă?» («Çемьери ĕç») ятлă пьесăна кĕртрĕ.

Лютовский драматурги енчен пысăк ăсталăхпа çырнă тата идея тĕлĕшĕнчен тарăн шухăшлă пьесине сцена çинче лартассине театр коллективĕ анăçлă пурнăçларĕ (спектакле йĕркелесе лартаканĕ—Л. Родионов режиссер).

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Г. Фадеев ватă рабочи Юзеф Каминский рольне ĕнерлелле те ăста вылять. Ку сăнара артист тĕрĕс ăнланса тунă. Çыннăн шалти туйăмĕсене вырăнлă уçса кăтартни ăста специалист сăнарне пуянлатать.

Юзеф Каминский арăмĕ хăйĕн ывăлне ватлăхра лăпкă пурăнма май парас тесе тăрăшать. Вăл, ывăлăн хушшинчи хирĕçӳсене сирсе ярса, çемьере килĕшӳллĕ пурнăç тунă ĕмĕтленет. Ку роле çавăн пек кăтартса пама Чăваш АССР халăх артистки О. Ырзем хăйĕн ăсталăхĕпе анлăн усă курать. Вырăнĕсенче вăл пĕрне ятлать, теприне ӳкĕтлет, çавăнтах макăрать, ӳкĕнет, юратать. О. Ырзем выляканн геройăн нумай енлĕ пуян сăнарĕ ытти рольсен характерне уçса пама та пулăшать. Çавăн пекех заводри чертежница рольне М. Иванова артистка куракансене килĕшмелле выляннине палăртмалла.

Театрăн пĕр бригади «Кам айăплă?» пьесăна çуллахи вăхăтра районсенче 77 хут лартса пачĕ. Пирĕн шутпа, спектакль нахалăхĕ хăшпĕр артистсем лайăх выляннинчен çеç мар, автор пултарулăхĕнчен те килет. Пьесăра хирĕçӳллĕ конфликтсем пулнă май, унти ĕçсем хивре явăнса пынине пула, спектакле интереслĕнсе пăхаççĕ. Артистсем пьесăри геройсен сăнарĕсене автор шухăшĕпе килĕшӳллĕн куракан куçне пуянлатса пынă пулсан, спектакль пахалăхĕ татах та ӳснĕ пулĕччĕ.

Пьесăри рольсене хăшпĕр артистсем мĕнле выляннине илсе пăхăпăр. Капиталистсен шпионла организацине сутăннă Ростковский, анă, çамрăк инженер Феликс тунă çĕнĕ изобретение вăрласшăн. Çакна пурнăçласа шутпа вăл институтра пĕрле вĕренекен Томашпа, Феликс шăллĕпе, туслашать. Ростковский Каминскисен çемйинче сывăх çын пулма тăрăшать, унта час-часах урок вĕренме çӳрет. Томаш ăна лайăх юлташ тесе шутлать. Феликс арăмĕ Ирэна та хăй ывăлĕнне Томаш юлташĕ йĕркеллĕ йĕкĕт пулни çинчен калать. Чăнах та, Ростковский пăхма культурăллă çын, вăл хăйне хĕрарăмсем умĕнче тытма та, çепĕç калаçма та ăста.

Дисциплина начар пирки, Томаш стипендии илмест, кун çинчен ашшĕ пĕлсессĕн хытă хăрать. Çакна енсе илсе тата вăл эрех ĕçкелĕме, хĕрсемпе çӳреме юратнине курса, Ростковский ăна йĕркенет, час-часах кинсен укçа та парать. Çак питĕ йĕркеллĕ, юлташне ырă тăвас шутпа яланах укçа паракан çын—чее шпион. Мĕнлĕ вăхăт çитсен, вăл Томашран укçине каялла ыйтать. Лешĕ укçа тупса пама пултарайманнипе кура вăл (пулăшас сăлтавпа çеç!) пиччĕшĕн проектне вăхăтлăха кăна вăрласа сутма сĕнет. Томаш килĕшменнипе курă, «апĕ сана укçа тупма пулăшатăп çеç» тесĕ ĕнентерет. Апла та килĕшмесен, Ростковский: «Асунтан ыйтма левет, вăл стипенди илменнине, сана укçа кирлине вăл ăнланатех», тесе хăратма пăхать. Тăшман чее те хаяр.

Çакăн пек чее тăшмана сăнласа кăтартма çамрăк артиста Г. Терентьева шанса панă, анчах вăл ку сăнара тĕрĕс уçса кăтартаймарĕ, Ростковский рольне выляна чухне çăмăл та йăнăш çул çине тăчĕ. Час ах туйса илмелле мар чее те ĕçлĕ шпион вырăнне Ростковский ăстиçук вак улталçă-хулиган пек пулса тухрĕ. Вырăнсăрах кусçаланса, артист çак сăнарăн тулаш енне вĕтетсе ярать. Куракансене кулăшла пултăр тесе, вăл кулмалла мар çĕртех, Томашпа пĕрле, ирĕксĕрех кулать. Автор шухăшĕпе кулмалла мар вырăнта кулмасть. Ун пек самантсенче Ростковский, ырă кăмăллă, таса чĕреллĕ çын пек пулса, Томаш ниÿĕленнине сирсе ямалла. Анчах, çăкнашкал кăткăс вырăнсене ĕнентерӳллĕн кăтартма пултараймаран пирки, артист Ростковский чăн-чăн шухăшĕсене тӳрех сиеле кăларать, усçăнах Томаша хĕсĕрлеме пуçлать. Томаш вара, хăйĕн юлташĕ тăшман пулнине пĕлсе тăрсассăх, ун валли пиччĕшĕн проектне вăрлать. Çавăн пек выляни Ростковский сăнарне çеç мар, Томаш сăнарне те йӳнетет, ăна куракансене йăнăш ăнлантарать. Томаш рольне выляккан Г. Филиппов артист хăй те, ку сăнар чăннипе мĕнле пулмалли çинчен манса, сцена çине халăха култарас шутпа çеç тухать. Вăл юрнех, сурма йĕлă çын каласнă пек, сăмахсене сăмса витĕр янăратса е вăрăммăн тăсса кăшкăрса калаçать. Хăй рольне вăл пĕтĕмĕшпех ашкăнса вылянă пек туйăнать. Çакна пула куракансем Ирэна сăнарне те йăнăш ăнланаççĕ. Вăл чее тăшман умĕнче йăнăшнине кура ăна хĕрхенес, ун пек кулянас вырăнне куракансем Ирэнăна юратми, кураймн пулаççĕ. Çак сăнарăн йăнăшĕ çавăн пекех Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки Т. Еруслаиова-Евсеева хăйне сцена çинче мĕнле тытмаланинчен те килет. Халтерен кăна качча тухнă, ывăлĕнне юратакан, пур енчен те килĕшӳллĕ кин вырăнне вăл сцена çинче хирĕçсе, тулашса çӳрекен çынна куратпăр.

Рольсене çавăн пек выляни, паллах, спектакль пахалăхне чакарать.

Çитменлĕхсем пулсан та, «Кам айăплă?» спектакль, пĕтĕмĕшпе илсен, куракансене хумхантарать. Вăл çĕнĕ сезонта театр репертуарĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнĕ.

Н. МОЛОДОВ.
Чăваш АССР халăх артисчĕ.

15 пин çын курнă

Чăвашсен республикинчи кусса çӳрекен колхоз театрĕ çулсеренех хăйĕн чи лайăх спектаклĕсене республика тулашĕнчи чăваш ялĕсенче лартса парать.

Кăçал театр А. Н. Островскин «Çур пус та çукчĕ, сасартăк виçĕ пус» ятлă комедине чи малтан Куйбышев облаçĕнчи Похвиçнĕ районĕнчи «Çĕнĕ пурнăç» колхоз членĕсене кăтартрĕ. Ăна курма çывăхри ялсемпе поселоксенчен 700 çын ытла пухăнчĕ.

Икĕ уйăх хушшинче театр коллективĕ Куйбышев облаçĕнчи Похвиçнĕ, Исаклĕ, Клевлĕ, Сергиевски, Кушкă районĕсенчи, Тутар АССРĕнчи Октябрьски, Тельман тата Аксу районĕсенчи чăваш ялĕсенче 57 спектакль лартрĕ. Вĕсене 15 пин çын ытла пырса курнă.

Куракансем пуринчен ытла Л. Тырина çырнă «Ашшĕпе ывăлĕ» драма тăрăх хатĕрленĕ спектакле юратса пăхрĕç. Вĕсем Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем М. Бикулова, Т. Соловьев, çавăн пекех Б. Трясугина, И. Ксенофонтов, З. Митрофанова тата ытти артистсем выляннине хапăл туса йышăнчĕç.

Курма пухăннă халăх колхоз клубĕсене вырнаçайман пирки нумай ялсенче артистсене урамра вăхăтлăх сценăсем туса парса выляттарчĕç. Спектакль курма вара сывăхри ялсенчен уй-хир ĕçченĕсемпе механизаторсем темиçе çĕршер çын, илемлĕ тумсем тăхăнса, хавасла юрăсем юрласа, машинăсемпе пухăнатчĕç. Колхоз театрĕ пынă кун кашни колхозшăн чăн-чăн уяв пулса тăратчĕ.

Артистсем ялти художествăлла пултарулăх коллективĕсене практикăлла пысăк пулăшу пачĕç. Похвиçнĕ районĕнчи Кăçăн Ӳпреслĕнчи хор кружокĕн членĕсене чăваш юррисем вĕрентнĕ хыççăн, вĕсем пирĕн артистсемпе пĕрле 3—4 ялта çитрĕç, çĕнĕ юрăсене татах та лайăхрах вĕренсе юласшăн пулчĕç. Исаклĕ районĕнчи Çĕнĕ Якăлĕнчи художествăлла пултарулăх коллективĕ пирĕн артистсем пулăшнипе районти юрă праçникĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнма тивĕçлĕ пулчĕ. Унăн колхоз правленийĕ пирĕн артистсене хаклă парнесем парса тав турĕ.

Куракансем кашни çулах пирĕнтен тепре килнĕ чухне чăваш драматургĕсем çырнă, паянхи пурнăçа кăтартакан пахаа произведенисене лартса пама ыйтаççĕ. Калас пулать, эпир кăçал та çав-çавах вĕсен ыйтăвне пурнăçлама пултараймарăмăр. Кун пирки театр дирекцийĕн çеç мар, республикăри Культура министерствин те, Чăваш писателĕсен Союзĕн те çине тăрсах тăрăшмалла.

В. МИХАЙЛОВ.
Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ.

ÇАМРĂК АВТОРĂН ПĔРРЕМĔШ КĔНЕКИ

Чăваш АССР Государство издательстви Иван Григорьевăн «Çуллахи кунсем» ятлă повеçне пичетлесе кăларнă. Повеçри ĕçсем вăрçă хыççăнхи çулсенче пĕр колхозра пулса иртеççĕ.

Кĕнекере 102 стр., хакĕ 1 тенкĕ те 65 пус.

Атăл тăрăхĕнчи художниксен конференцийĕ умĕн

Кашни виçĕ çултах Атăл тăрăхĕнчи облаçсемпе автономиллĕ республикăсенчи художниксен конференцийĕ пулса иртет. Унта художниксем пĕр-пĕрин творчествăлла опычĕпе паллашаççĕ, выставкăна тăратнă ĕçсене тишкереççĕ.

Çак кунсенче Шупашкарта Атăл тăрăхĕнчи художниксен конференцине илсе каймалли произведенисене пăхса тухрĕç. 15 художник пурĕ çĕр произведение ятăн тăратнăччĕ, вĕсенчен Куйбышева яма 35 ĕç суйласа илнĕ. Вĕсем хушшинче В. Гурин, П. Григорьев, Р. Ермолаева, С. Скрябин тата ытти художниксен, çавăн пекех иртнĕ çулсенче художество училищинчен вĕренсе тухнă Н. Онуфриевпа Н. Карачарсков юлташсен произведенийĕсем пур.

Шупашкарти художниксен çурчĕн мастерскойĕнче.
Ӳкерчĕк çинче: иртнĕ çул Шупашкарти художество училищинчен вĕренсе тухнă çамрăк художник Н. Карачарсков ĕçре.
Ф. Иванов фотоӳкерчĕкĕ.

ÇАМРĂК АГРОНОМА

Сунмак пĕр вĕçсĕр тĕкĕлать.
Ик енĕпе те хăйĕн тырă
Пуçне тайть те калаçнать.
Ухмашкăн çĕнĕл. Кунĕ ырă.

Умри тавралăх илĕртет,
Утатăн эсĕ васкамасăр.
Питне ранниĕн сĕртĕнет
Тулли пучах, сана савса-тăр.

Тăван ялта тăватă çул
Нулманчĕ эс, Мускав студенчĕ!
Ак халь килсен сан-сутă çул
Сана ила илсе çитарчĕ.

Эс—агроном! Ялпа ан яр!
Мĕнпур вăйран ĕçле хастаррăн.
Асту, ĕçĕ сан çăмăл мар,
Сапак та тăрăш эс маттуррăн.

Хăюллă чуплисем кăна
Ныврăлăхра пуça усмаççĕ!..
Тăван çĕршыв шанать сана,
Яла сыннисем сана шанаççĕ.

Аристарх ДМИТРИЕВ.

Эсĕ илтнĕ пулĕ...

Парти çитĕнтерчĕ ывăл-хĕрĕ
Кунта килчĕ иртнĕ çуркунне;
Тракторсем кĕрлерĕç кунĕн-çĕрĕн,
Ӳçрĕç ĕмĕрхи çеремсене.

Иртрĕ хĕрӳ çуркунне, ак халĕ
Уй-хире пăхсан—чун савăнать!
Сухалмарĕ çамрăклăх вăй-халĕ—
Вăл сар тулă пулса хумханать.

Эсĕ илтнĕ пулĕ Казахстанăн
Пĕр мельярд пăт памалли çинчен.
Ман пату çитесчĕ, тусăм, санăн,
Çав тырра вырмашкăн тухиччен.

Арс. АНДРЕЕВ.
Кокчетов облаçĕнчи Чеховски тĕштырă совхозĕн трактористĕ.

Казахстан.

„Ялав" библиотеки

Чăваш совет писателĕсен союзĕ кăларакан илемлĕ литературăпа общественнăла-политикăллă «Ялав» журнал çумĕнче çĕнĕ çултан пуçласа «Ялав» библиотеки» тухма пуçлать. Кашни уйăхра пĕрер кĕнеке пичетлесе кăларма палăртнă. Вĕсенче чăваш писателĕсем тата тăванла республикăсенчи писательсен çырнă калавсем, очерксем, сăвăсемпе поэмăсем тата ытти çĕнĕ произведенисем пичетленеççĕ. Кашни кĕнекен хакĕ 50 пус пулать, çулталăка илсе тăма çырăнма утă тенкĕ тӳле, мелле.

«Ялав» библиотекин пĕррĕмĕш номерĕнче — «Шупашкар тинĕсĕ» ятлă кĕнекере—Шупашкар гидроэлектростанцийе водохранилищи çинчен çырнă очерксене пичетлеме палăртнă.

Хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор юррисем

РСФСР тата Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ Павел Егорович Егоров нумай çулсем хушши халăх сăвви-юррисене пухса та та вĕсене илемлетсе тĕлĕшне ĕçлет, çав вăхăтрах хăй те юрăсем çырать.

Çак кунсенче Чăваш АССР государство издательстви Егоров çырнă юрăсене уйрăм кĕнеке туса кăларчĕ. Унта хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор çырнă 8 юрă пичетленнĕ.

Юрăсен сăмахĕсене Хуми Семенĕ, Василий Давыдов, Степан Павлов поэтсем çырнă.

Ăсатса ярсам

Музыки Ф. ЛУКИНАН. Сăвви Н. ЕВСТАФЬЕВАН.

1. Хуш çу хĕвелĕ
Кулчĕ тухăçран.
Пăхрĕ вăл илемлĕн
Манăн кантăкран.

Ирторех эс тат-ха,
Тусăм, тĕлĕкне.
Каччуна ăсат-ха
Кулунда енне.

2. Вĕçсĕр çеçенхирĕн
Ылтăн тулăине
Пухмалла халь пирĕн
Çĕршыв куштипе.

Ан хурлан, ан хуçăл —
Пăх ман куçăмран:
Пурнăç çулĕ уçă,
Савăнăç умра.

3. Уйăрлар халь ыррăн, —
Килес çул ху та
Савăнсах эс пырăн,
Тусăм, ман пата.

Тепĕр хут ман алă
Чун юратнине
Вĕçертмĕ ытадĕ
Хыттăн ун чухне.

Асăрхаттарни: кашни куплетрах юлашки тăватă йĕркине икшер хут юрламалла.

Концерт программи тивĕçтермерĕ

Иртнĕ кунсенче Çĕмĕрле хулине Чăваш государство симфониллĕ оркестрĕ килсе кайрĕ.

Пирĕн шутпа, çак оркестрăн задачи вăл классикăлла музыкăпа пĕрлех чăваш музыкине халăх хушшине сарасси, чăваш композиторĕсен произведенийĕсене пропагандăласси пулмалла. Концерта пынă çынсем (чăвашсем кăна мар) чăваш музыкине итлеме, чăваш композиторĕсен симфониллĕ произведенийĕсемпе паллашма ĕмĕтленнĕччĕ. Анчах та концерт программи вĕсен кăмăлне тивĕçтереймерĕ. Оркестра ертсе пыракансем концерт програмии валли номерсем суйласа илнĕ чухне халăх ыйтăвне шута илмен.

Чăваш композиторĕсем симфониле оркестр валли чылай произведенисем çырнине эпир пĕлетпĕр. Темшĕн вара вĕсенчен пĕрне те концерт программине кĕртме шутламан.

Е. АФАНАСЬЕВ.
«Социализмла ĕç» хаçат редакторĕ.

Çĕмĕрле хули.

ХУДОЖЕСТВĂЛЛА ОЧЕРКСЕМ ÇЫРАС ТĔЛĔШПЕ ИРТТЕРНЕ КОНКУРС ИТОГĔСЕМ

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ 1955 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа» кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕччен художествăлла очерксем çырас тĕлĕшпе конкурс ирттерчĕ. Çав тапхăрта редакци 70 очерк ытла илчĕ, вĕсенчен нумайăшĕ хаçатра пичетленсе тухнă.

Конкурс результачĕсене пăхса тухнă хыççăн, хаçат редакцийĕ вĕрремĕш премии никама та парас мар тесе йышăнчĕ.

Иккĕмĕш премие В. Алагера «Район центрĕнче» очеркшăн (1.000 тенкĕ) памалла тунă.

Виççĕмĕш премисене А. Канашпа Ю. Кожанова—«Чĕре хушсан» очеркшăн, И. Максимов-Кошкинскине «Хĕрӳ чĕре» очеркшăн (500-шер тенкĕ) панă.

Ф. Уяр, П. Хусанкай, Л. Агаков, А. Эзельь, А. Алга очеркĕсене хавхалантармалли премисем парса палла тунă.

Очерксем çырас ĕçе активлă хутшăннăшăн редакци В. Алендея, А. Артемьева, С. Аслана, Е. Еене, И. Кузьмина, В. Максимова, А. Медведева, К. Пайраша, Уйăп Мишшине, Т. Харламьева П. Шипцова, С. Эльгере тав тăвать.

ЧИПЕР АННА

КАЛАВ

...Вăл ытти сенчен маларах тухса тăчĕ те, уçă та вăйлă сасăпа юрласа ячĕ:

Атăл тулать, хумĕ вылять,
Юрату евĕр ăйлтăртатса...

Самантранах ку юрра сцена çинче тăракан пĕтĕм хор хутшăнса юрлама пуçларĕ. Юрă хăнатлăн та илемлĕн янăрарĕ, çынсен чĕрисене пырса тивсе вĕсен кăмăлĕсене çĕклерĕ, хавхалантарчĕ.

Çав вăхăтра залри халăх хушшинче ларакан пĕр каччăн хăмăр куçĕсем маларах тăрса юрлакан хĕр çине çав тери тинкерсе пăхрĕç. Питĕ илемлĕ-çке вăл...

— Кун пек хитре хĕре куçран вĕçертес марччĕ,—теççĕ каччă куçĕсем.

Чăнах та, вăл ăна сухатмарĕ. Юнашар ларакан тепĕр каччăран çак хĕр хăш ялсем пулнине тата ятне ыйтса пĕлчĕ.

— Садам... Эс мана пĕлместĕн, анчах эпĕ сана паллатăп. Эсĕ кĕтмелсем, сана Анна тесе чĕнеççĕ. Пĕлетĕн-и, эпĕ сана виçĕ çул шыраратăп,—терĕ каччă, концерт хыççăн çав хĕр умне пырса тăрса.

Анна ун çине питĕ тĕлĕнсе пăхрĕ. Мĕнле çын вара ку? Сăнран-питрен хурламалла мар, вăтам пӳллĕ. Куçĕсем ăйлтăртатса йăшăн пăхаççĕ.

— Эсĕ тĕлĕнетĕн пулас?.. Эпĕ Кируш ятлă, манса каймастăн-и ман ята?

— Ма манас...—терĕ Анна, ним калама пĕлмесĕр.

— Питĕ лайăх юрларăн эсĕ...

— Эц... пĕччен мар вĕт, пирĕн колхоз хорĕ лайăх юрлать...

Кăштах калаçкаласа тăнă хыççăн, Кируш Аннăна кăруççел çинче ярăнма чĕнчĕ. Вĕсем юнашар ларса çавăрăнчĕç. Чипер хĕрпе чипер каччă çине çынсем ырă кăмăлпа пăхрĕç. Унтан каччăпа хĕр каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕç. Юрă праçникĕ саланма пуçласан тин Анна киле каясси çинчен каларĕ. Анчах Кируш уйрăласшăн пулмарĕ, Аннăна вăл хăйсен ялне çитиччен ăсатма пычĕ.

...Анна ача чухне вĕсем патĕнче ватăрах учительница хваттерте пурăннă. Хăйĕн ачи пекех юратнă вăл пĕчĕк Анюка. Унран Анна хутла çеç мар, çĕвĕ çĕлеме те, тĕрĕ тĕрлеме те, тĕрлĕ пахч çимĕçсем лартса ӳстерме те вĕренсе юлнă. Мĕн пĕчĕкренпех тасалăха кăнăхса ӳснĕ май, вăл ялан лайăхрах та илемлĕрех тумланса çӳреме юратнă. Тен çавăнпах та-и, ялта ăна «Чипер Анна» тесе чĕнме пуçланă.

Халĕ ĕнтĕ Анна ӳссе çитнĕ хĕр. Ун çине нумай каччăсем куç хывса пурăнаççĕ. Акă, Кируш та юратса пăрахрĕ пулмалла ăна... Анчах кĕркунне çитсен Аннапа Кирушăн нумайлăха уйрăлмалла пулчĕ: Кируша Совет Çарне илчĕç. Вăл килтен тухса кайиччен Аннапа çыравашăн пулчĕ. Çакăн пек хитре хĕр хăйне кĕтсе пурăнасса шанмарĕ пулас çамрăк чун. Виçĕ çул хушшинче таçам та тупăнма пултарать! Анчах Анна ăна: шанчăк хут çинче мар, чĕрере пулмалла, тесе лăплантарчĕ.

* * *

Юлашки çулсенче колхоз сачĕ çав тери ӳссе, асланса кайрĕ. Ĕлĕк ним усăсăр, çапçара выртнă çырма-çатрасенче темĕн тĕрлĕ çырла тата улма йывăççисем ешереççĕ. Икĕ колхоз пĕрлешсен садоводсем Анаткасла Кĕтмел сачĕсене тăсса пырса пĕр пысăк сад тăвасси çинчен сăмах хускатрĕç. Ку ĕçе юнашар колхозăн, халĕ ĕнтĕ иккĕмĕш бригадăн садовочĕ Илья Васильевич Викторов пуçарса ячĕ.

— Тырпул акма юрăхсăр, çырма-çатраллă та çăртлă вырăнсем пирĕн сахал мар-ха. Çав вырăнсенче пĕтĕмпех садсем тумалла,—терĕ вăл садоводсен правленире пулнă канашлăвĕнче.

Çавăнтах хăш тĕле мĕнле йывăçсем — ăста ир пиçекен сортсем, ăста каярах юлса пиçекен сортсем лартмалли çинчен, хăмăр енчи йывăçсене кăна мар, кăнтăрти сортсене те ӳстерме кирли çинчен каларĕ. Ун сăмахĕсемпе пурте килĕшрĕç.

— Питĕ ăслă çын пикеç ку...—шухăшларĕ Анна Илья Васильевич çинчен.—Арăмĕ телейлĕ ĕнтĕ унăн...

Кăнракла çакна пĕлчĕ Анна: сад ĕçне Илья Васильевич мĕн ачаранпах хăнăхса çитнĕ. Ĕлĕк вĕсен килĕнче питĕ лайăх сад пулнă. Анчах вăрçă вăхăтĕнче, Илья Васильевич фронтра чух, вăйлă сивĕсемпе шăнса хăрнă. Вăл пуçарса янă колхоз сачĕ те пĕтсе ларнă.

— Пĕтĕмпех сăнавсен пуçламалла,—тенĕ те Илья Васильевич вăрçăран таврăнсан, малтан хăй юратнă ĕçе тытăннă.

* * *

Садра хĕлле те ĕç сахал мар.

Виçĕ кун та виçĕ каç çавăрттарнă сиптăман хыççăн Илья Васильевич тап-таса юр çине йĕр туса колхоз садне кĕчĕ. Ун хыççăн Аннапа унăн хĕр тантăшĕсем шакăлтатса калаçса утрĕç. Таврара çав тери илемлĕ...

Илья Васильевич бригадăна уй хĕррине илсе тухрĕ.

— Сакăнтан пуçлăпăр. Кунта сивĕрех пулать, тата мулкачсем те чаррак çитеççĕ...

Хĕрсем çемçе те кăпăшка юра улмуççисем сумне купалама тытăнчĕç. Пĕрер сехет пек вăхăт иртсен, ăшă пулнипе хĕрсем тумтирĕсене те хывса хучĕç. Кас пуличченех илтĕнчĕ хĕрсен сасси лăпкă садра. Вăл вĕсен питĕ лайăх йĕса пычĕ...

Киле таврăннă чух, çула май, Анна хăйĕн ашшĕ патне, садри хурал пӳртне кĕрсе тухма шут турĕ.

Пӳрт алăкне уçсанах, вăл сунакан тимĕр кăмака умĕнче икĕ пĕчĕк ача ларнине курчĕ.

— Мĕнле халăх сан кунта, атте?—тĕлĕнсе ыйтрĕ Анна.

— Илья Васильевичăн ачисем вĕсем. Шутсăр маттур ачасем,—терĕ ашшĕ, пĕр ачине сурăмĕнчен лăпкаса илсе.

— Мĕнле майпа килнĕ вĕсем кунта?

— Ашшĕ хăйĕнпе пĕрлех илсе килчĕ. Вут хутса кăлама ăлкĕнеймерĕм, сивĕ пӳрте пăрахса хăварас килмерĕ, тет. Çавă ĕнтĕ, амăшĕ çук та вĕсен—каклă...

Анна нумаях пулмасть Илья Васильевичăн арăмĕ пĕлтĕр ӳпке шыççипе вилсе кайнине илтнĕччĕ çап. Анчах илтнĕ те манна. Халĕ акă унăн тăлăх ачасене çав тери шеллес килсе кайрĕ.

Кăшт тăхтасан Илья Васильевич хăй те хурал пӳртне пырса кĕчĕ. Ачисене киле кайма васкатрĕ вăл. Анна пĕчĕкреххине тумланма пулăшрĕ те, урама тухиччен йăтса пырса ăсатса ячĕ.

Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ. Çавă хăй хыççăн уяр çуркунне çитрĕ. Садра та пурнăç чĕрĕлчĕ. Улмуççисем, çырла йывăççисем, шамăк пек чечекĕсемпе капăрланчĕç. Вĕсем тавра кăпăксем юрă шăрантараççĕ. Ытармалла мар...

Çавăн пек кунсенчен пĕринче, Анна хăйĕн юлташĕсемпе садра ĕçлекĕ чух, йĕтмеç çĕртен, çырмаран хăпаракан сукмак тăрăх салтак тумĕ тăхăннă кĕрнеклĕ çын утса тухрĕ.

— Кируш!—палласа илчĕ ăна Анна.—Хăçан килтĕн?

Кируш хĕрсем патне пырса пурне те алă пачĕ. Калаçу пуçланса кайрĕ... Асту, мĕнле пурăннă, вăл та ку... Кируш пурнине те кăмăллă калаçрĕ. Унтан вăл Аннăна сапран тухма чĕнчĕ. Анна, ăнсăртран пек, Илья Васильевич çине пăхса илчĕ, унăн куçĕсем темле салхуллăн пăхнине асăрхарĕ-вăл. Çав вăхăтрах унăн хăйĕн кăмăлĕ те хуçăлнă пек пулчĕ...

Çаптан Кируш Анна патне çырусем пĕрмаях çырнă, кашниннех ăна юратни çинчен калаçнă, «пĕр сана курас ĕмĕтпе çеç пурăнатăп», тенĕ. Анна та унăн пĕр çырăвне те ответсăр хăвармаш. Киле таврăнма вăхăт çитсен, вăл: хам ирĕкпе тепĕр çулăха юлатăп, тесе пĕлтерчĕ. «Халĕ вăрçă вăхăчĕ мар, иккен-ĕнинех пулас çук...» Анна ăна хирĕç: «Хăвăнне ху пĕл», тенĕ. Шутпа, Кируш кăçал кĕркунне таврăнмаллаччĕ ĕнтĕ, анчах çу варринчех килсе çитрĕ. Мĕншĕн ун пек пулни çинчен Анна ыйтас темерĕ, ун пирки вăл пылак хайран пĕлчĕ...

Эрнерен вĕсем çыранчĕç. Темшĕн, Кируш васкасах авланасшăн пулчĕ.

...Тепĕр уйăхран вара туй пулчĕ.

* * *

Аннан çĕнĕ çĕрте çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ. Ют яла, ют кил-çуртра пулин те, юратнă упăшкипе пурнăçĕ пурнăç илемлĕ. Ĕçсĕр пурăнма вĕренменскер, вăл кунта та ахаль лармарĕ, туй хыççăн ик-виçĕ кунтанах хĕрарăмсемпе пĕрле колхоза ĕçлеме тытăнчĕ.

Анчах Кируш хăй ĕçе тытăнма васкамарĕ. Вăл мĕнле те пулин лайăхрах вырăна кĕме ĕмĕтленсе пурăнчĕ.

— Сартан таврăннă çынна лайăх ĕç тупса пама тивĕç,—терĕ вăл.

Утă çулса тертĕлленĕ вăхăтра Анна пĕрре ăна ирех вăратрĕ:

— Капансем, хыватпăр паян, пулăшма пыратăн пулĕ, арçынсем сахалтарах пирĕн,—терĕ вăл ăна.

Кируш мăшлаткаласа илчĕ те, стена енелле саврăнса выртрĕ.

— Ма вăрататăн чипер çывăракан çынна? Асту, унсăр утă капанĕ хывăнмĕç!—терĕ Кируш амăшĕ, кăмăлсăрланса.

— Эпир Кируша яланах тăрăшччен çывăратнă. Халĕ, çартан килнĕскере, ытларах кантармалла. Ун вырăнне хăвăн ытларах ĕçлес пулать!—шăл питĕн сăрхăнтарса илчĕ Кирушăн кăнча каймал ватă аппăшĕ.

Анна эсĕсне хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Вăл хăйне кунта ним вырăнне те хуманнине ăнланса илчĕ. Çара кайса килнĕ çын кун пек пуласса вăл нихçан та шухăшламан... Кируш пуринчен кайран тăрать те, сур сехет хушши çăвăнать. Унтан кашни тăхăнмалли ярăмне тасатса тăхăнма тытăнать, кайран тĕкĕр умĕнче сӳсне пĕрре апла, тепре капла тураса хурать. Кăнтăрла та çитсе килть вара. Сĕтел çинче ăна тутлă апат кĕтет, анчах апачĕ сивĕнме ĕлкĕрнĕ пулсан—Кируш хăр-хăр тура илет...

* * *

Сиснĕмесĕрех кĕркунне çитре...

Кĕвел пуçĕпех çунĕ пек, пĕрре те курăнмасть. Сăптăлăк ялан сулхăн та тĕксĕм, час та часах вĕтĕ сумăр пĕрĕхе-пĕрĕхе илет.

Аннапа Кируш аппăшĕ колхоз лашипе станцие çитсе тăчĕç. Аппăшĕн Шупашкара больницăна каймалла пулнă—юлашки вăхăтра шав пуç ыратнипе аптранă вăл. Анна ăна леçме пынă.

Аппăшне билет илсе парса поезд çине лартсанах, Анна хӳмерен кăкарнă лаши патне пычĕ те киле кайма хатĕрленчĕ. Çав вăхăтра вăл сасартăк темле хĕрарăм: «Гражданка!» тесе чĕннине илтрĕ те, каялла çаврăнса пăхрĕ. Ун патне вырăсла тумланнă хĕрарăм пырса тăчĕ. Вăл плащ тăхăннă, пуçĕнче кăвак шлепке, ун айĕнчен кăтра сарă çӳç курăнать. Çурăмĕ хыçĕнче пысăк рюкзак-кутамкка, пĕр аллинче—пĕчĕк ача, тепринче—чемодан. Анна çине вăл мăшкăллă куçĕсемпе пăхрĕ те, хурлăхлăрах сасăпа:

— Эсир, ăнсăртран, Анаткас енелле каймастăр пулĕ те?—тесе ыйтрĕ.

— Шăпах çавăнта каятăп,—терĕ Анна.

— Апла пулсан, мана илсе каймăр-ши?

— Ма илсе каяс мар? Эпĕ пĕччен. Ларăр!

— Ой, тимтапуçах сире!..—хăпĕртсе кайрĕ хĕрарăм.

«Шкула çĕнĕ учительница килет, — терĕç, çавă пулас ĕнтĕ ку»,—шухăшларĕ Анна, хĕрарăма тăрантас çине вырнаçтарса лашине чуптарма тытăнсан. Унтан, кăшт кайсан, ларкăç çинчен каялла çаврăнса, ыйтрĕ:

— Эсир инçетрисем-и?—тесе ыйтрĕ.

— Инçетрисем çав. Белоруссинчен эпĕ,—терĕ хĕрарăм.

Сăмах хыççăн сăмах. Ют хĕрарăм калаçма юратакан скер пулчĕ, вăл хăйсен çĕршывĕ çинчен калаçа пачĕ, кунти пурнăç çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Тепрер сехетрен Анаткас ялĕнчи йăмрасем курăнма пуçларĕç.

— Сире шкула кĕртсе хăвармалла пулĕ?—ыйтрĕ Анна.

— Мĕн тума шкула?—тĕлĕнчĕ хĕрарăм.—Манăн унта ĕçĕм çук...

— Эсĕ учительница мар-и вара?

— Çук. Эпĕ ку яла хам упăшка патне килетĕп... Тен, эсĕ ăна пĕлетĕн те пулĕ-ха: Макаров кушаматлă вăл.

— Макаров? Мĕнле Макаров?

— Кирилл Макарович. Ма ун пекех тĕлĕксе пăхатăн ман çине? Ăна мĕн те пулин пулман пулĕ те?..—Ачаллă хĕрарăм куçне мăч-мăч тутарса илчĕ.

— Çук... Нимĕн те пулман...—терĕ Анна пуллен. Хăйĕн упăшкин атне илтсен, унăн сассн тăрук çĕтсе ларчĕ.

— Мăклерех пурăнать -вăл? Темшĕн, юлашки вăхăтра çырусем сахал çырчĕ те...

— Аван пурăнать пулас,—аран сăвăр уçрĕ Анна.

Унăн сывлăшĕ пӳлĕнсе ларчĕ. Пĕр хушă вăл ним илтми, ним ăнланайми пулса ларчĕ. Чĕри сиксе тухас пек тапма тытăнчĕ, пичĕ куçĕ вĕçерсе кайрĕ.

«Кирушăн арăмĕ эппин ку... Кируш арăмĕ! Ачипех... Пĕтрĕ пуç! Пăххалĕ, чиперех лартса килетĕп вĕт... Акă, пĕр-пĕр шырлана тӳнтеретĕп те хăваратăп! Пирĕн яла сан валли çул çук, тетĕп»...

Çав вăхăтра сарă çӳçлĕ хĕрарăмăн ачи темшĕн шарнех кăшкăрса макăрса ячĕ. Çакă Аннана темле тӳрех урăхла шухăшлаттарма пуçларĕ.

«Тепĕр тесен, ку хĕрарăм айăплă та мар... Пĕтĕмпех Кируш айăплă! Вăл ĕнтĕ, пӳтсĕр, ăна та: юрататăп, сансăр пурăнма пултараймастăп, тенĕ пулĕ. Тем тĕрлĕ те мухтаннă ĕнтĕ тата... Халĕ ĕнтĕ мĕн тумалла манăн? Вĕсем—çемье, ачаллă та пулнă. Эпĕ кам? Никам та мар. Мĕншĕн мăшкăлларĕ вăл манран? Икĕ çул хушши çырусем çырса пурăнтăмăр. Эпĕ шаннă ăна, вăл пурулталарĕ... Пĕтрĕ çамрăк ĕмĕрĕм!»

Аннан çине-çинех сутă куççулĕсем юхса анчĕç. Ачаллă хĕрарăм асăрхасран, вăл ун енелле пĕрре те çаврăнса пăхмарĕ, ахалех лайăх юртакан лашана турткаласа пычĕ.

«Çĕлен, çĕлен пулнă эсĕ, Кируш, этем мар!..»

Унăн тек Белоруссин хĕрарăмĕпе те калаçас килмерĕ. Вĕсем ăста тĕл пулнине те, мĕн чухлĕ пурăннине те пĕлесшĕн пулмарĕ Анна... Çын калаçнине те илтес килмерĕ. Сиксе анас та лав çинчен, чупас ăçталла та пулин, çырмасем урлă, вăрманалла... Анчах ун пек тумарĕ, хăйне хăй хытарма тăрăшрĕ.

Кирушсен тĕлне çитсен вăл лашине тăрук тăратрĕ.

— Çитрĕмĕр! Çакă ĕнтĕ сирĕн кил!

Анна ачаллă хĕрарăма тăрантас çинчен анма та хăех пулăшрĕ, унăн япалисене те килхуçин хапхи патнех çитерсе пачĕ.

— Темшĕн, хăратăп эпĕ—терĕ ют хĕрарăм Анна çине пăхса.

— Мĕн хăрамалли пур, кĕр те кай! Эсĕ таçта мар, савкунлă упăшку патне килнĕ вĕт!..

Хăй вара çавăнтах тăрантас çине сиксе ларчĕ те, лашине пĕррех туртса çапса, колхоз витисем енелле вĕçтерчĕ.

* * *

Каç пулнă чух, çумăр айĕнче лачкам шыв пулса, Анна тăван киле çитрĕ. Вăл ăйне тумтирĕсене улăштарса тăхăнчĕ те, пуç çинчен витĕнсе ашшĕ вырăнĕ çине кĕрсе выртрĕ. Нумайччен куç хупса выртрĕ вăл. Чĕри çаплах-ха сиксе тухас пек тапрĕ, пуçĕнче тем тĕрлĕ шухăшсем пăтранчĕç. Вĕри те тăварлă куççулĕсем минтер патне йĕпĕнех тухрĕç...

(Юлашки 4-мĕш страницăра).

Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Лондонра пухнă конференцире

Д. Т. ШЕПИЛОВ 1956 çулхи августăн 17-мĕшĕнче тухса калани

Совет Союзĕ çакна шанса тăрать: государствăсен суверенлăх прависене хисеплесе тата тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрине халыхи вăхăтшăн кирлĕ пек, пĕртан право никĕсĕ çинче килĕштерсе ĕçлессине вăйлатса, шалти ĕçсене хутшăнмасăр, Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйтăва та татса пама пулать. Кунта та ĕнтĕ ĕçе тĕрĕс хаклани, тӳрĕ кăмăлпа тăрăшни кирлĕ.

Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйтăвăн, тесе кăтартса панă Шепилов, икĕ енĕ пур: Суэц каналĕн компанине национализацилени çинчен тăракан ыйту тата канал тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕх çинчен тăракан ыйту. Пĕррремĕш ыйту пĕтĕмпех суверенлă Египет государствин шалти ĕçĕсен шутне кĕрет. Эпир шалти ĕçсене хутшăнмалла мар текен принципа пăхăнса ĕçлес тетпĕр пулсан, çак ыйтăва нимĕнле конференципе те сӳтсе явма юрамасть. Иккĕмĕш ыйту нумай государствăсене пырса тивет. Тĕнчери халăхсен прави енĕпе пăхсан, пĕр-пĕр государство хăйĕн прависене пурнăçласа пыракан территорири харпăрлăха национализацилени вăл законлă ĕç пулса тăрать. Государство харпăрлăха, пурлăх хуçи кам—çак государство гражданĕсем е ют çĕршыв çыннисем — пулнине пăхмасăр, национализациле пултарать. Тĕнчери халăхсен прави çак положение Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй ассамблейи 1952 çулта йышăннă резолюципе те çирĕплетнĕ.

Чылай государствăсем ют çĕршыв капиталĕ хутшăннă компанисене национализацилени кăтартакан хăшпĕр фактсем çинчен аса илтерсе, Совет делегацийĕн пуçлăхĕ çапла каланă: харпăрлăха национализацилесси çинчен тăракан ыйту тĕлĕшпе тĕнчери халăхсен прави тата тĕрлĕ государствăсен практики пĕтĕмпех паллă ĕнтĕ, вĕсем Египет тĕрĕс ĕç туни çинчен калаççĕ. Хăшпĕрисем каланă тăрăх, Суэц каналĕн компанийĕ çак канала тытса тăрас тĕлĕшпе «тĕнчери çĕршывсен функцине» пурнăçласа пынă имĕш, çавăнпа та вăл Египет государствин прависене пăхăнмалла мар имĕш. Совет делегацийĕн пуçлăхĕ çак шухăш тĕрĕс маррине кăтартса панă.

Эпир, тенĕ Д. Т. Шепилов, çапла шутлатпăр: Суэц каналĕн компанине национализациленĕ чухне Египет правительстви тĕнчери халăхсен правине пăхăнса ĕçленĕ, çак ыйту суверенлă Египет государствин шалти ĕçĕсен шутне кĕрет, ăна çак канашлура та, тĕнчери çĕршывсен мĕнле те пулин урăх конференцийĕнче те сӳтсе явма юрамасть.

Малалла СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ суднăсем çӳретес ирĕклĕх ыйтăвĕсем çинчен тата хĕвеланăçĕнчи хăшпĕр державăсен позицийĕ çинчен каланă.

Суэц каналĕ, тенĕ вăл, паллах ĕнтĕ, Египет каналĕ пулса тăрать. Çавăнпа пĕрлех Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕх ытти çĕршывсене питĕ интереслентернине те йышăнмасăр тăма юрамасть. Канал Хĕвеланăçĕнчи государствăсемшĕн те, Хĕвелтухăçĕнчи государствăсемшĕн те, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи суту-илӳпе тĕнчери коммуникацисемшĕн те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку ыйтупа интересленнине Суэц каналĕпе усă куракан мĕнпур çĕршывсен правительствисен заявленийĕсенче уççăн палăртнă.

Европăри, Çывăх Хĕвелтухăçĕпе Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи, Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çĕршывсен экономикишĕн Суэц каналĕ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Франци, уйрăмах та Англи тата çавăн пек ытти çĕршывсем Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕхшĕн мĕн пирки тăрăшнине эпир лайăх ăнланатпăр.

Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕх пулни, çак канал йĕркеллĕ ĕçлени Совет Союзне те питĕ кирлĕ.

Хĕвеланăçĕнче: Египетăн халыхи правительствине тата Египет государствин пуçлăхне Насер президента шанма йывăр, текен сасăсем илтĕнеççĕ. Тĕнчери ĕçсем çинче çапла пăхни вăл, тенĕ Д. Т. Шепилов, урăх государствăн шалти ĕçĕсене хутшăнас политика пулса тăрать, урăх нимĕн те мар. Çак ĕçре вăл урăх çĕршыв прависем çине, Египет харпăрлăхĕ çине алă çĕклемелли сăлтав.

Фактсем, тенĕ вăл малалла, çакна кăтартса параççĕ: хăшпĕрисем Суэц каналне тытса тăрас ĕçе малашне те ют çĕршывсен аллинче сыхласа хăвармалли, çак ĕçрен Египета пăрса ямалли çулпа пыма шутлаççĕ.

Çакна май СССР делегацийĕн пуçлăхĕ Англи, Франци тата США представителĕсем августăн 7-мĕшĕнче хатĕрлесе панă сĕнĕве асăннă. Ку сĕнӳре «Суэц каналне тытса тăрас тĕлĕшпе тĕнчери çĕршывсен органне туса хурасси çинчен» каланă. Тĕрĕс ĕнтĕ, тенĕ Д. Т. Шепилов, хăй ĕнер тухса каланă сăмахра Даллес господин çав документа асăнмарĕ, унăн сăмахĕнче США позицине кăшт урăхларах кăтартса панă. Ку «сĕнӳре» Суэц каналĕ тĕлĕшпе ĕçлеме тĕнчери çĕршывсен органне туса хума палăртнă, канала администраци, экономика тата техника енĕпе тытса тăрас ĕçе çак органăн хăй аллине илмелле, тенĕ. Эпир çапла шутлатпăр: маларах асăннă проект халыхи вăхăтри чăн-чăн лару-тăрăва та, Египет халăхĕн вырăнлă, тĕрĕс требованийĕсене те шута илмест.

Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕн принципĕсене, Азипе Африкăри 29 çĕршыв хутшăннă Бандунгри конференци йышăннă резолюцие, çавăн пекех тĕнчери халăхсен правин нормисене асра тытса, тенĕ малалла Шепилов, Совет Союзĕ Египет территорийĕн пĕр пайне—Суэц каналĕ иртсе пыракан района—Египетăн суверенлă прависем пырса тивмен территори тесе шутламалла тенине килĕшме пултараймасть. Египет—хăйĕн территорийĕн тулли влаçлă пĕртен-пĕр хуçи.

«Суэц каналне тытса тăрас тĕлĕшпе тĕнчери çĕршывсен органне» туса хуни вăл Суэц каналĕн халиччен пулнă компанине, урăх ят парса, ытти хăшпĕр государствăсене хутшăнтарса, канала тавăрнине пĕлтерне пулĕччĕ. Çавăн пек орган туса хуни вăл Египетра ют çĕршыв капиталне вăл 1866 çулта тунă концесси вăйра тăнă вăхăтра усă курнинчен те пысăкрах правăсем панине пĕлтерĕ пулĕччĕ. Концесси çинчен тунă килĕшӳре, çапах та ĕнтĕ, вăл 99 çултан пĕтсе ларасси çинчен каланă. «Тĕнчери çĕршывсен канала тытса тăмалли управленийĕн» çĕнĕ проектĕнче вара мĕн чухлĕ вăхăт вăйра тăмалли çинчен нимĕн те асăнман, урăхла каласан, канала тытса тăрас тĕлĕшпе çавăн пек йĕркене ĕмĕрлĕхех тума шутлаççĕ пулмалла.

Суэц ыйтăвне татса парас ĕç çине мĕнле пăхмалли çинчен сăмах хускатса, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ çапла каланă:

Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетме тăрăшать, вăл лайăх условисем тăвасшăн, çак условисенче Суэц каналĕ хирĕçӳсемпе тытăçусен кĕтесĕ мар, халăхсем хушшинчи туслăх вырăнĕ, тĕнчери çĕршывсем суту-илӳ тăвакан вырăн пултăр тесе тăрăшать, çак суту-илĕве вăйлатас ĕç хирĕçӳсемпе вăрçăсем пулмалла мар тума хушать.

Государствăсен наци интересĕсене тĕнчери халăхсем экономика тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлес интересĕсемпе тĕрĕс çыхăнтарни, çак çыхăну государствăсен суверенлă прависене хисеплес йĕрке çинче никĕсленсе тăни кăна çĕршывсем хушшинчи хирĕçӳсене пĕтĕм тĕнчери мир интересĕсемшĕн, государствăсем хушшинче лайăх та йĕркеллĕ хутшăнусем туса хурас ĕçшĕн кирлĕ пек татса пама май парать.

Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕхе тата çак канал суднăсем çӳретме усăллă, ирĕклĕ, усă тата хăрушлăхсăр тивĕç çулĕ пулса тăрассине шанчăклăн гарантилессине çыхăннă ыйтусене шăпах çав маларах калаиие шута илсе татса пама тăрăшмалла. Кунта тивĕçлĕ йĕркепе, Египет хутшăнса ĕçленине, çак суверенлă государствăн прависене тата интересĕсене, çавăн пекех каналпа усă куракан мĕнпур государствăсен интересĕсене шута илсе, çавăн пек гарантисем паракан мерăсем хатĕрлесси çинчен сăмах пырать.

1888 çулта тунă, халĕ вăйра тăракан конвенцире Суэц каналĕ тăрăх суднăсем ирĕклĕ çӳремелине палăртнă. Малтанах асăннăччĕ ĕнтĕ, Египет правительстви хăй çак конвенци тăрăх илнĕ обязательствăсене пурнăçласси çинчен çирĕплетсе каларĕ. Çакна май чылай государствăсем малашне Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕхе сыхлас, çавăн пекех канала кирлĕ пек йĕркеллĕ тытас тĕлĕшпе хăйсен шухăшĕсене каларĕç. Çĕнĕ условисене тата халыхи вăхăтри ĕçсене шута илсе, 1888 çулхи конвенци вырăнне тĕнчери çĕршывсен çĕнĕ конвенцийĕ тăвасси е 1888 çулхи конвенци çумне хушса килĕшӳ тăвасси çинчен ыйту тухса тăрать. Çакна ăна Египетăн суверенлă прависене пăхăнса, Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕхе çирĕплетме тата гарантилеме кирлине асра тытса тумалла. Кунта çакăн пирки асăрхаттарас пулать: Египет правительстви çак ыйтупа интересленекен государствăсен тивĕçлĕ правăллă конференцине пухса çавнашкал конвенци тăвас шухăшпа хăй килĕшни çинчен каларĕ.

Совет правительстви шучĕпе, тĕнчери çĕршывсен çавнашкал килĕшĕвне çавăн пек тĕп принципсен никĕсĕ çинче тума пулĕччĕ.

Мĕнпур государствăсен интересĕсем çапла тума хушаççĕ: Суэц каналĕ пирки тухса тăнă хирĕçӳсемпе чăрмавсене тĕрĕс, мирлĕ майсемпе усă курса, тĕнчери халăхсен прави нормисемпе, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн принципĕсемпе килĕшӳллĕн йĕркелемелле.

Кунта Египет государствин Суэц каналĕ тĕлĕшĕнчи суверенлă прависене, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи суту-илӳре, тĕнчери коммуникацисенче пысăк вырăн йышăнса тăракан, тĕнчери нумай государствăсем усă куракан Суэц каналĕн пĕлтерĕшне пĕтĕмпех шута илмелле; çак государствăсене канал тăрăх суднăсем ирĕклĕ çӳретес йĕрке питĕ кирлĕ.

Суэц каналĕ мĕнпур государствăсен суту-илӳ тата çар суднисене çӳретме ялан ирĕклĕ те усă пулмалла; çакă вăл суднăсем çӳренĕшĕн тата портсемпе усă курнăшăн илекен тӳлевсем, суднăсем çӳретмелли мĕнпур условисем тĕлĕшпе пуриншĕн те пĕр пек йĕркепе пулса пымалла.

Канала хăйĕн суверенлă прависене кура хăй аллинче тытса тăракан Египет çакăн пек обязательствăсем илĕччĕ: Суэц каналĕ тăрăх суднăсене ирĕклĕ çӳретме, канала тата унăн мĕнпур сооруженийĕсене упрама, суднăсем çӳретес ирĕклĕхе пăсасран сыхлама кирлĕ мĕнпур мерăсем йышăнма; канала суднăсем çӳретме кирлĕ пек йĕркеллĕ, кучухнехи техника шайĕнче тытма; Суэц каналĕ тăрăх суднăсем ытларах çӳреме пултарччăр тесе, суднăсем çӳретмелли условисене лайăхлатас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тума.

Тĕнчери хăшпĕр ушкăнсенче суднăсем канал тăрăх тухса кайнă чухне илекен халыхи тӳлев ставкисене кĕтмен çĕртенех ӳстерĕç тесе шикленсе каларĕç. Тӳлев ставкисем пĕр виçере пулмаллине асра тытса, вĕсем çинчен тăракан ыйтăва, çавăн пекех вĕсене хăш енелле те пулин улăштармалли йĕркене Египетпа пĕрле сӳтсе явас пулать.

Халĕ вăйра тăракан конвенци çине алă пуснă çĕршывсем çакăн пек обязательство илнĕ: нимĕнле условисенче те Суэц каналне никам та пырса тĕкĕнмелле мар йĕркене пăсма е канал çинчи сооруженисене, учреждениесене, çуртсене тата ĕçсене сиен кӳме пултаракан ĕçсем тумăпăр, тенĕ. Çак обязательствăна халĕ çĕнĕрен çирĕплетес пулать. 1888 çулта тунă конвенцире палăртса хунă положенисем тăрăх, Суэц каналĕ районĕнче пиксан та вăрçă пулмалла мар; нимĕнле тăшманла ĕçсем те е канал çинче тата унта пырса кĕмелли портсенче илсе çӳрес ирĕклĕхе сиен кӳрес тĕллев лартакан нимĕнле ĕçсем те тумалла мар; канала блокада тумалла мар.

Çавăн пекех Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕх çинчен тунă конвенцие пурнăçлассине çыхăнса тăракан ыйтусем енĕпе тĕнчери çĕршывсене пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлеме Египетшăн юрăхлă йĕрке тăвасси çинчен Египет правительствипе пĕрле сӳтсе явма пулĕччĕ. Эпир çапла шутлатпăр: çавăн пек килĕштерсе ĕçлени, паллах ĕнтĕ, Египетăн суверенлă прависене хисеплесси тата унăн шалти ĕçĕсене хутшăнмасан, çĕршывсен интересĕсене тивĕçтермешкĕн пулăшма пултарĕччĕ. Çакна май, сăмахран, Индире, каланă шухăшсене тимлĕн тишкерсе пăхас пулать. Кирек мĕнле пулсан та, эпир çапла шутлатпăр: канал тăрăх суднăсене йĕркеллĕ тата пĕр чăрмавсăр çӳретес ĕçпе тӳрремĕнех интересленекен Египет çакăн çине кирлĕ пек тимлĕн пăхĕ, канал тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕхе гарантилес ыйту енĕпе пĕр-пĕрне ăнланса илме май паракан çул-йĕрсем шыраса тупма пулăшĕ. Çакă вăл Суэц каналне национализациленĕ пирки юлашки вăхăтра хăшпĕр çĕршывсенче шикленерех шухăшланине сирсе яма пулăшĕ.

Совет правительстви çапла шутлать: Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ирĕклĕхе сыхламалли мерăсем çинчен тăракан ыйту çине çавăн пек пăхсан, ыйтăва унпа интересленекен мĕнпур государствăсемшĕн юрăхлă майпа йĕркелеме, Çывăх Хĕвелтухăçпе Вăтам Хĕвелтухăç районĕнче шанчăклă мирпе хăрушсăрлăх туса хума пулĕччĕ.

Тавлашăва ирлĕн, калаçусем ирттернипе татса пама кирлине асра тытса ĕçлес пулать. Çак канашлура пĕр-пĕрин шухăшĕсене каласа панă хыççăн пуриншĕн те юрăхлă хăшпĕр принципсем палăрсан, çавсене конкретлăн татса памашкăн государствăсен представителĕсен конференцине пухма пулĕччĕ. Августăн 12-мĕшĕнче Египет правительстви Суэц каналĕ пирки тĕнчери çĕршывсен анлă конференцине пухасси çинчен сĕнӳ тăратрĕ, çак конференцие 1888 çулхи конвенци çине алă пуснă çĕршывсем тата каналпа усă куракан мĕнпур çĕршывсем хутшăнмалла, терĕ. СССР правительстви ĕç интересĕсемпе килĕшсе тăракан çак сĕнĕве ырлать.

Çавăн пек конференци составĕ çинчен, ăна хăçан тата ăçта пухасси çинчен тăракан конкретлă ыйтусемпе ытти ыйтусене хатĕрленӳ комиссийĕ тĕпчесе хатĕрлеме пултарĕччĕ. Комисси составĕнче, сăмахран, çак государствăсем: Египет, Инди, США, Англи, Франци, Совет Союзĕ пулма пултараççĕ.

Юлашкинчен Д. Т. Шепилов çапла шанса тăни çинчен каланă: çак конференци участникĕсем Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи лару-тăрăва çăмăллатас ĕçе, пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне тивĕçлĕ вăй хума тăрăшĕç.

Египет. Асуан пĕвин пĕр пайĕ.
Кейстон агентстви фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн секретариачĕ Суэц каналĕ ыйтăвĕ пирки тунă заявлени

ВЕНА, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн секретариачĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Тĕнчери лару-тăру лайăхланса пыни усăллă пулни палăрма пуçланă тата нацисем хушшинчи тавлашуллă ыйтусене йĕркеленĕ чухне ăс-тăнлă шухăш тата вăйпа усă курма пăрахасси çĕнтерессине кĕтме май пур вăхăтра Египет Суэц каналне национализациленĕ пирки хăшпĕрисем тухса каланисем тĕнчери общественноçа пăшăрхантарса хумхантараççĕ.

Кризис пуçланнă сăлтавсем, тĕрлĕ çĕршывсен правительствисем çар енĕпе хатĕрленни тата ответлă политикăлла деятельсем юнаса каланă сăмахсем миршĕн тăракан мĕнпур çынсене хумхантарма пуçларĕç.

Çак ыйту пирки уйрăм çынсен шухăшĕсем арасна пулин те, халыхи лару-тăру вăхăтĕнче никам та нацисем хушшинчи хутшăнусем тĕлĕшпе усă курма пăрахмалли киревсĕр меслетсен патне тепĕр хут таврăнасшăн мар.

Лондонри конференци вăхăтĕнче пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракансен юхăмĕ тĕнчери çĕршывсем хушшинчи тавлашуллă ыйтусене татса парас ĕçри ирĕксĕрлемелли меслетсене тепĕр хут сивлет, çав меслетсене татăклăнах пăрахăçлас пулать.

Лондонри конференци ыйтăва тĕрĕс татса пама пулăшассине шанаççĕ-ха, унăн ĕçне малтанах хакламасăр тата çав конференци результачĕсем мĕнле пуласси çинчен малтанах каласа хумасăр, пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракансен юхăмĕ çапла пуласшăн шанса тăни çинчен пĕлтерет: ку ыйтăпа интересленекен çĕршывсен хушшинче калаçусем ирттернине кăна анлăлла тата татăклăн йĕркелеме пулать. Çав решени Египет пĕтĕмпех никама пăхăнмасăр тата суверенлă çĕршыв пулнине, каналпа усă куракан çĕршывсен законлă интересĕсене шута илме тивĕçлĕ.

Пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракансен юхăмĕ тĕрлĕ çĕршывсен общественноçне Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕн никĕсĕнчи принципсене хӳтĕлеме чĕнет, çавăн пекех тата правительствăсене ыйтусене татса парас ĕçре ялан çав принципсене шута илме чĕнет.

ГЕРМАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИНЕ ĔÇЛЕМЕ ЧАРАСШĂН

БЕРЛИН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: паян Хĕвеланăç Германин Карлсруэри конституционнăй сучĕ Германири Коммунистсен партине чарса лартасси çинчен приговор йышăннă. Çавăнпа пĕрлех прогрессивлă обществăлла организацисенчен чылайăшне салатса ярасси çинчен решени йышăннă.

ÇАНТАЛĂК

Шупашкарти Гидрометбюро пĕлтернĕ тăрăх, августăн 19—20-мĕшĕсенче Чăваш республики территорийĕнче улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулмалла, вырăнĕ-вырăнĕпе кĕске вăхăт хушши çумăр çумалла, аслати авăтмалла. Вырăнĕ-вырăнĕпе тĕтре пулмалла, çил вăйлах пулмалла мар. Сывлăшри температура çĕрле 7—12 градус, кăнтăрла 17—22 градус ăшă пулмалла.

Пĕлтерни

Августăн 21-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотекинче Чăваш АССР Социальнăй обеспечени министрĕ А. И. Воронцова юлташ Государство пенсийĕсем çинчен доклад тăвать.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

К и н о

«РОДИНА». Августăн 19-мĕшĕнче кăнтăрлахи тата каçхи сеанссенче илемлĕ фильм «Есть такой парень»; августăн 20-мĕшĕнче: кăнтăрлахи сеанссенче илемлĕ фильм «Есть такой парень», каçхи сеанссенче çĕнĕ фильм «За власть Советов».

СССР халăх хуçалăхне юсаса аталантармалли виççĕмĕш государство заемĕ

10-мĕш выляма тухнă облигацисене тĕрĕслемелли

ТАБЛИЦА

Выляв тиражĕ 1956 çулхи августăн 12-мĕшĕнче Кишинев хулинче пулнă.

Заемăн мĕнпур разрячĕсенчи серисемпе облигацисен çак номерĕсем çине выигрыш тухнă.

Сери №№	Облигаци №№	Мыçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Мыçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Мыçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Мыçе тенкĕ
040040	37*)	1.000	044923	30*)	1.000	049645	29*)	1.000	054840	10*)	5.000
040176	1—50	500	045075	39*)	1.000	049695	26*)	1.000	054852	31*)	1.000
040394	1—50	500	045407	1—50	200	049701	44*)	1.000	054862	1—50	200
040408	25*)	1.000	045527	1—50	500	049702	26*)	1.000	054876	01*)	1.000
040439	08*)	1.000	045593	1—50	200	049882	1—50	200	054940	30*)	1.000
040489	1—50	500	045649	1—50	500	049908	25*)	50.000	055009	14*)	1.000
040577	29*)	1.000	045721	50*)	1.000	050119	1—50	500	055129	1—50	200
040676	1—50	200	045884	11*)	25.000	050148	1—50	200	055641	06*)	1.000
040707	45*)	1.000	045969	27*)	5.000	050193	1—50	200	055751	26—50	200
040784	22*)	1.000	045971	48*)	1.000	050309	46*)	1.000	056003	47*)	1.000
040909	16*)	1.000	046000	48*)	5.000	050518	1—50	200	056106	27*)	1.000
040942	41*)	1.000	046149	1—50	200	050533	46*)	1.000	056389	34*)	1.000
041050	19*)	10.000	046179	01*)	1.000	050837	1—50	500	056418	1—50	200
041110	29*)	1.000	046359	29*)	1.000	050871	1—50	200	056432	48*)	1.000
041123	43*)	1.000	046473	36*)	1.000	051096	13*)	1.000	056578	1—50	500
041192	35*)	1.000	046588	1—50	200	051112	30*)	1.000	056604	1—50	200
041195	02*)	5.000	046739	42*)	1.000	051152	48*)	1.000	056757	10*)	1.000
041546	1—50	500	046797	1—50	200	051278	31*)	1.000	057219	38*)	1.000
041650	41*)	10.000	046894	1—50	200	051607	1—50	500	057304	1—50	500
041687	15*)	1.000	046968	31*)	1.000	051764	21*)	1.000	057456	1—50	500
041750	1—50	200	047072	06*)	1.000	051929	1—50	500	057516	10*)	5.000
041856	43*)	5.000	047148	1—50	500	052000	1—50	200	057675	24*)	5.000
042047	25*)	1.000	047202	41*)	1.000	052060	41*)	1.000	057700	03*)	1.000
042089	18*)	1.000	047452	15*)	1.000	052080	1—50	200	057872	34*)	1.000
042220	26*)	1.000	047456	36*)	10.000	052426	30*)	1.000	057879	1—50	500
042262	1—50	200	047661	28*)	1.000	052430	44*)	1.000	058005	38*)	1.000
042553	28*)	1.000	047868	26*)	1.000	052547	1—50	500	058160	03*)	1.000
042703	27*)	1.000	047934	1—50	200	052568	24*)	1.000	058270	33*)	10.000
042852	12*)	1.000	048152	1—50	200	052793	1—50	200	058300	18*)	1.000
043002	48*)	1.000	048316	47*)	1.000	052831	09*)	1.000	058505	30*)	1.000
043308	07*)	1.000	048345	26*)	1.000	052985	1—50	500	058566	14*)	1.000
043485	23*)	1.000	048347	05*)	1.000	053119	26*)	1.000	058768	05*)	1.000
043778	1—50	200	048537	45*)	1.000	053269	08*)	1.000	059014	13*)	1.000
043926	41*)	1.000	048725	06*)	5.000	053601	15*)	5.000	059067	31*)	1.000
043968	1—50	500	048778	04*)	1.000	053938	20*)	1.000	059089	09*)	1.000
044117	07*)	1.000	048881	48*)	1.000	054054	1—50	200	059218	31*)	1.000
044411	03*)	1.000	049188	1—50	200	054117	14*)	1.000	059329	40*)	1.000
044464	25*)	1.000	049270	34*)	1.000	054220	04*)	1.000	059441	22*)	1.000
044743	41*)	1.000	049297	07*)	1.000	054310	1—50	500	059770	07*)	5.000
044803	08*)	10.000	049601	1—50	200	054453	13*)	25.000	059790	48*)	1.000
044872	22*)	1.000	049610	1—50	200	054466	47*)	1.000	059925	1—50	500
044873	07*)	1.000	049624	22*)	1.000	054728	1—50	200	059949	13*)	1.000

*) Çак сери кĕрекен облигацисен ытти 49 номерĕ 200-шер тенкĕ выляса илнĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧĔН УПРАВЛЕНИЙĔ.

ЧИПЕР АННА

(Юлашки. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра).

Тĕттĕм пулсан ашшĕ пырса кĕчĕ. Вырăн çинче Анна выртнине асăрхасан, старик хăрасах кайрĕ.

— Мĕн пулчĕ капла, ачам?—хыпăнса ӳкрĕ ашшĕ.

Анна кăштах лăпланчĕ те, паян мĕн пулса иртни çинчен пĕтĕмпех каласа пачĕ.

— Çын картинчен тухнăскер эппин вăл,—хаштах сывласа ячĕ вара ашшĕ.—Унщăн кулянма та кирлĕ мар... Сур та хур ун çине!

Çав вăхăтра вĕсем патне Кируш васкаса пырса кĕчĕ.

— Ырă кас пултăр сире,—терĕ вăл, хăй хашкнине путарма тăрăшса. Унтан, хăйне хирĕç хăшĕ те пулин сăмах каласса кĕтсе илеймесĕрех, Анна патнелле пычĕ.

— Анюк, мĕн пулчĕ сана? Чирлемерĕн пулĕ те?

Анна чĕнмерĕ...

— Лăплан, Анна! Эсĕ ăнланмасăр хăтланатăн. Леш майрине эпĕ киле те кĕртмерĕм, тӳрех хăваласа ятăм.

— Ан сулăх ман çумма!—сиксе тăрса ларчĕ Анна.—Икĕ питлĕ çын эсĕ, ирсĕр, ултавçă! Тухса кай кунтан! Арăмупа ачу патне кай!

— Чим-ха эсĕ, тăхта... Аса кĕр... — уйрăлмарĕ унтан Кируш.

— Эсĕ ху ăса кĕр!—терĕ çав самантра Анна ашшĕ, Кируш патнелле çилĕпе утса пырса.—Кунта ухмаха ернисем çук! Тек манăн киле сан уру, та ан пултăр! Илтрĕн-и?

Кируш алăк патнелле чакса пычĕ...

...Анна çĕрĕпех çывăрăймарĕ. Ытла та йывăр пулчĕ ăна, çĕр тĕслĕ аса-илӳ иккĕнчĕ ун пуçĕнче, тем тĕрлĕ шухăш... Тул çутăласпа тин тĕлĕрсе кайрĕ вăл, вăранни чух сехет йĕппи саккăр патнех çитнĕччĕ. Кăшт лăпланнăскер, вăл тӳрех леш Белоруссри хĕрарăмне аса илчĕ. «Эп ăна киле те кĕртмерĕм», терĕ Кируш. Эппин, мĕн тăвать-ши вăл мĕскĕн хĕрарăм? Ăна манран та йывăртарах пулĕ-ха, вăл тăстан инçетрен килнĕ, çитменнине унăн алăри ачи те пур. Питĕ шел ăна...

Анна тумланчĕ те, пĕр тытăнса тăмасăрах Анаткасалла утрĕ. «Тухса кайман пулĕ-ха... Ăçта кайтăр ĕнтĕ вăл тăруках?..»

Чăн та, хĕрарăм çав ялтах пулнă. Анна ăна уй хĕрринчи пĕр карчăкпа старик патĕнче тупрĕ. Анна пӳрте кĕрсенех, хĕрарăм алăри ачине хăй çумне пăчăртаса чӳрече еннелле çавăрăнса тăчĕ. Килхуçисем ăна Анна çинчен каласа панă пулмалла ĕнтĕ...

— Итле, юлташăм, эпĕ сан умăнта нихăш енчен те айăплă мар,—терĕ Анна, ун умнелле пырса ларса.—Пирĕн иксĕмĕрĕн те пĕр пек хурлăх...

— Пĕлетĕп. Анчах эпĕ те сан умăнта айăплă мар. Çак чирлемен пулсан, эпĕ халех тухса кайăттăм та...—терĕ хĕрарăм, ăна çине кăтартса. Вăл пĕшĕклесе макăрса ячĕ. Унтан:—Вăл ман пата килчĕ паян, анчах эп ăна хăваласа ятăм,—терĕ, сассине хытарма тăрăшса.

— Тĕрĕс тунă! Эпĕ те хăваласа ятăм.

Анна унăн куçĕсенчен тинкерсе пăхрĕ.

— Эсĕ... мĕн ятлă? Мана Анна теççĕ.

— Вера.

— Акă мĕн эппин, Вера. Куççуль тăкнипе кунта нимĕн те тăваяс çук. Атя эсĕ пирĕн пата. Эпир аттепе çеç пурăнатпăр. Сана та, ачупа та япăх пулмĕ. Ăна та сывататпăр... Атя, кайран мĕн тăвасси курăнĕ унта...

— Епле лайăх çын эсĕ...—терĕ те ăна хирĕç Вера, унăн каллех куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

...Пĕр уйăх хушшинче Верăпа Анна çывăх тусласа, пĕр-пĕрне питĕ лайăх пĕлекен пулса çитрĕç. Вера ашшĕне нимĕç фашисчĕсем персе пăрахнă, амăшĕ чирлĕ пулнă. Çавăнпа та Вера çамрăклах хăй ĕçлеме тытăннă. Юлашки икĕ çул хушшинче вăл хăйсен хулинчи пĕр магазинра ĕçленĕ. Кирушпа ăнсăртран, вĕсен полкĕ Верăсен хулинче тăнă чух паллашнă. Пĕр-пĕрне килĕштернĕ вĕсем... Служба срокĕ тухсан вара Кируш тӳрех Верăсем патне пурăнма кучнă. (Анчах Аннана: пĕр çуллăха «сверхсрочно» юлатăп, тесе çырнă, намăссăр!..) Верăн ача çуралнă... Ун хыççăн темиçе уйăхранах Кируш киле каясси çинчен калаçма пуçланă. Верăна кулянма хушман: кĕркунне килсе илсе каятăп сире, тенĕ. Вера ĕненнĕ. Анчах Кируш çырусем çырма пăрахнă пирки, тата çанталăк ытлашши сивве кайиччен тесе, Вера хăйех кунта килме шут тытнă.

Унăн ачи сывалса вылякан пулсан, Анна ăна малтан илсе килнĕ çулпах станцине ăсатрĕ...

* * *

Каллех çулла пулчĕ. Кунсем çав тери уяр та шăрăх. Вĕри хĕвелпе садри çырласем пиçеççĕ, улмасем тутланаççĕ. Тӳрĕ те вăрăм йăрансем çинче хĕрсем юрла-юрла çырла татаççĕ. Колхоз кашни кун хулана икшервиçшер машина шултра çырла ăсатать—виктори, ир пулакан чие, хăмла çырли, хурлăхан...

Анна сад варринче утать. Лутра улмуççи патĕнче Илья Васильевич тем ĕçленине курсан, вăл тăпах чарăнса тăчĕ.

— Ырă кун пултăр, Илья Васильевич!

— Э-э, Анна-çке!—терĕ садовод, ăна сассинченех палласа.—Кил-ха, тыт çак турата, каясĕрлет... Тепĕр алă пулнă пулсанах чăрмантармăттăм та...

— Халĕ те темиçе алăшăнах ĕçлетĕн эсĕ,—терĕ Анна, унпа юнашар кукленсе ларса.

— Çук çав, тумалли ĕççене писпле те туса çитерейместĕп. Пĕччен пурнăç—пурнăç мар вĕт-вăл, анчах та мĕн тăвас тетĕн?

— Мĕншĕн авланмастăн эппин эсĕ, Илья Васильевич?—темĕнле хăйса ыйтрĕ те Анна, хăй писнĕ чие çырли пек хĕрелсе кайрĕ.

— О-о, ку ытла та пысăк ыйту вара!.. — Анна çине кăмăллăн пăхса илчĕ Илья Васильевич.—Телейсĕр çын эпĕ вăл енчен. Тĕрĕссипе, мана ирăм мар, ачасем валли вмăшĕ кирлĕ. Ун пеккине ăçтан тупатăн? Камăн пăхас килтĕр ют ачасене?

Анна ăна хирĕç нимех те калаймарĕ. Вăл шухăша кайнă пек пулчĕ, çав вăхăтрах унăн Илья Васильевич пуçне хăй çумне тайăнтарса ачашласа илес килчĕ. Улмуççи патĕнче ĕç пĕтсен, чĕри хыттăн-хыттăн тапма пуçланине туйса, вăл хĕрсен çенĕç юрри илтĕннĕ çĕрелле утрĕ. Вĕсемпе пĕрле вăл хăй те юрла-юрлах ĕçлерĕ.

— Эсĕ паян ытла та хавасла-çке?—асăрхарĕ çавна пĕри.

— Мĕн вара, манăн ялан хуйхăрса пурăнмалла-им? Çитет ĕнтĕ,—терĕ ăна хирĕç Анна,—тек хуйхăрмастăп!

Юлашки машина çине çырла ещĕкĕсем лартса ăсатса ярсан, вĕсем пурте пĕрле килĕсене таврăнчĕç. Хĕрсенчен уйрăлса пăрăнсанах, Анна хăйсен хапхи умĕнче тăрантас кӳлнĕ лаша тăнине курчĕ те тĕлĕнсех кайрĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку?

Вăл килĕ патнерех çитсен, хапхаран ăна хирĕç Кируш тухса тăчĕ. Ăна курсан Анна тăпах чарăнчĕ.

— Эп сана кĕтетĕп,—терĕ Кируш, ун çине куç харшисем айĕн пăхса.

— Мĕн тума кĕтетĕн?

— Сана илме килтĕм. Çитет пире ила кун чухлĕ култарнипе. Атя, тумлан. Паян шăпах эпĕ çуралнă кун, пирĕн пата хăнасем пухăнаççĕ. Сансăр аван мар пулать. Сан пирки эпĕ пурне те: вăл вăхăтлăха ашшĕне пулăшма кайнă, тесе пурăнтăм. Тата мана сельпо председателĕ тăвас хыпар пур, çавăнпа та манăн районти работниксем умĕнче хам йĕркеллĕ çын пулнине кăтартмалла. Председатель арăмĕ пулатăн...

Кируш Анна патнелле пĕр-ик утăм ярса пусрĕ. Унран эрех шăрши кĕнине туйса, Анна каялла чакрĕ.

«Неушлĕ çак çына юратнă эпĕ?»—йĕрĕнсе шухăшларĕ вăл.

— Эпĕ шӳт тума килмен кунта, ну? — сассине хăпартрĕ Кируш.—Ахалех кураймастăн эсĕ мана. Манăн сан умра вăйлăм пысăк мар... Пулнă—иртнĕ! Халĕ эпĕ ун пек мар. Как калас—тӳрлентĕ...—Вăл Аннана ыталама тăчĕ, анчах Аннашăн ку хăйне çĕлен сăхма тăнă пекех пулчĕ. Вăл тарăн сывласа илчĕ те, шăл витĕр, хуллен, анчах çирĕппĕн каласа хучĕ:

— Çитĕ... Тасал пирĕн тĕлтен, Макаров... юлташ!

— Ну-ну, ан курнăçлан! Сансăр каймастăп эпĕ кунтан...

— Эсĕ каймастăн пулсан, эп хам каятăп эппин!—татса хучĕ Анна.—Эпир пĕр çулпа пыма пултараймастпăр!—Вăл вăрт кăна çаврăнчĕ те урам тăрăх васкасах сад еннелле утрĕ.

Садран Илья Васильевич ачисене çавăтса тухнине курсан, вăл ăна хирĕç васкаса утрĕ...

Александра ЛАЗАРЕВА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-09, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-07, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—13-37, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00595 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2419. Тираж 29.600 экз.